Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи
февралĕн 17-мĕшĕнче
тухма пуçланă

• 2025 çул •

Авăн (сентябрь), 5

• ЭРНЕКУН •
35/10775/№

Хакĕ ирĕклĕ

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег НИКОЛАЕВ:**



«Клиентсемшĕн тимлени – кашни енĕпех пирĕн ĕçе сăнлакан тĕп пахалăх пулса тăрать. Çакă вăл экономикăн чăн секторĕн аталанăвĕнче те – промышленноçри, строительствăри, ял хуçалăхĕнчи, социаллă сфера аталанăвĕнче те – сывлăх сыхлавĕнчи, вĕрентӳри, культурăри, спортри, эпир хамăрăн тивлетпе усă куракансен, Чăваш Енре пурăнакансен интересĕсене мала хума тивĕç. Патшалăхпа çыхăнни çынсемшĕн меллĕ пултăр, пулăшусем илесси вара – ансат та уçă, юрăхлă тата вăраха тăсăлмасăр пулмалла».

## ПРЕСС-ЦЕНТР

**Сентябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне округри ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсем 5976 гектар çинчи пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тĕш тырă культурисене пухса кĕртнĕ. Ку вăл мĕнпур лаптăкăн 57 проценчĕпе танлашать. Уйран пурĕ 19766 тонна тырă кĕнĕ, кашни гектар вăтамран 33,1 центнер тухăç панă.**

**Ытти культурăсенчен севок-сухан 4 гектар кăларса пухнă, пурĕ 16 тонна хатĕрленĕ.**

**Кĕрхи тĕш тырă культурисене ку вăхăт тĕлне пурĕ 654 гектар акнă, çак шутран 445 гектарне кĕрхи тулă йышăннă.**

**580 гектар çĕртме сухи тунă ку вăхăт тĕлне.**

**Утă 7276 тонна (100,2 процент), сенаж 20613 тонна (97,6 процент), силос 200 тонна (2 процента яхăн) хатĕрлесе хунă. 202 тонна улăм пресласа хатĕрленĕ.**

# Эстафетăра нумайăн ăмăртнă

**Тăвайри «Аль» спорткомплекс стадионĕнче çынсене физкультурăпа спорта юратма хăнăхтарас тĕллевпе республикăри çăмăл атлетсен округри тапхăрĕ иртнĕ. Уголовнăй ĕçе пурнăçлакан тытăмăн ветеранне, шалти ĕçсен генерал-майорне Василий Валерианович Федорова асăнса чупу йĕркеленĕ. Пурăннă пулсан Василий Валерианович сентябрĕн 5-мĕшĕнче 65 çул тултаратчĕ.**




Чупăва уçнă вăхăтра

Унта Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕн çумĕ Ирина Семенова, ФСИН Чăваш Ен управленийĕн начальникĕн çумĕ Владимир Чучаков подполковник, В.В.Федоров çемйин членĕсем, Тăвайри муниципалитет округĕн командисен участникĕсем тухса калаçнă, пурне те спорт уявĕпе саламланă, ăмăртăва хутшăнакансене çĕнтерме суннă.

Виталий Валерианович Алексей ятлă ывăлĕ ятарлă çар операцийĕнче службăра тăрать: ăна хăюлăхпа паттăрлăхшăн икĕ орденпа наградăланă. А.Кириллов тĕп судья эстафета йĕркипе паллаштарнă. Округри культура ĕçченĕсем пухăннисене юрласа хавхалантарнă. Шалти службăн генерал-майорне Василий Валерианович Федорова халаллана çăмăл атлетика чупăвне УФСИН ертӳлĕхĕпе сотрудникĕсем те, Тăвай муниципалитет округĕн çыннисем, предприятисемпе организацисенче тата учреждениесенче ĕçлекенсем, шкул ачисем, уйрăм çынсем хастар хутшăннă. Командăсен участникĕсене наградăсемпе хавхалантарнă.

**Альбина НИКИТИНА**

# Тăвай фермерĕсен çитĕнĕвĕсем

**Çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче Етĕрне округĕнче Чăваш Республикинчи фермерсен VI слечĕ иртнĕ. Ял хуçалăхĕнчен çак ĕçпе çыхăннă 250 ытла çын хутшăннă унта. ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Серей Артамонов, ял хуçалăх министрĕ Андрей Макушев пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх представителĕсемпе тĕл пулнă.**

Кăçалхи çур çул кăтартăвĕсене илсен, ял хуçалăх производствин индексĕ мĕнпур йышши хуçалăхсенче 106,4 процентпа танлашнă, ку енĕпе Чăваш Ен Атăлçи округĕнчи 14 регион хушшинче 2-мĕш вырăнта.

Фермерсен слетĕнче ял хуçалăх производствине пысăк тӳпе хывнăшăн Вырăс Нăрваш салинче пулă ĕрчетессипе ĕçлекен Евгений Новиков республика Пуçлăхĕн Тав хучĕпе алла çыхмалли сехете тивĕçнĕ.

Слетра «Чи лайăх 100 фермер хуçалăхĕ» 2024 çулта епле ĕçленин рейтинг пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарнă. 1–10-мĕш вырăнсене кĕнисене уйрăммăн палăртса чысланă. ХФХсен чи лайăх ертӳçисем хушшинче Валерий Грачев пуррине палăртма кăмăллă. Ĕçри пысăк кăтартусем тăрăх ăна I степеньлĕ дипломпа наградăланă.







Слетра В.Грачевпа (сулахайри ӳкерчĕк) Е.Новикова чысланă самант

## РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

- Иртнĕ пилĕк çулта Чăваш Енре пĕчĕк тата вăтам бизнесăн çĕнĕрен йĕркеленнĕ предприятисен шучĕ 40 процент ытла ӳснĕ. Республика экспорчĕн тĕп пайĕ – 95 процент – вĕсен тӳпи.
- Чăваш Енре кăçал 150 пин ытла ача парта хушшине ларнă, вĕсенчен 13800 ача – пĕрремĕш класа каякансем.
- Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен республикăри пултаруллă 6 çамрăк Борис Щукин ячĕллĕ театр институчĕн студенчĕсен йышне кĕнĕ. Чăваш Енрен харăсах çакăн чухлĕ маттур çамрăк актера Мускава вĕренме яни 23 çул каялла çеç пулнă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев вĕреннĕ вăхăтра та, аслă шкултан вĕренсе тухса тăван ене таврăнсан та пулăшу пуласса шантарнă. Хастар студентсен йышĕнче Тăвай округĕнчи Чутей хĕрĕ Елена Михайлова та пур. Кăçал Федор Павлов ячĕллĕ музыка училищинчен лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă вăл. Пулас профессие суйлама ăна Тăвайри ача-пăча музыка шкулĕнче вĕренни те нумай пулăшнă.
- Авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче вăрман ĕçченĕн, 6-мĕшĕнче финансист, 7-мĕшĕнче нефть тата газ промышленноçĕн ĕçченĕсен кунĕсене паллă тăваççĕ.
- ЧР Пуçлăхĕ Шупашкар округĕнче ĕçлĕ çулçӳреве пулнă май «Чурачикское» обществăра çĕнĕ ферма уçма хутшăннă. Проект хакĕ – 75 млн тенке яхăн. Çитес вăхăтра предприяти 2400 пуç выльăх вырнаçмалăх пысăк комплекс хута ярас тĕллевлĕ. Олег Николаев Шупашкар округĕнче Чăваш Енри АПК ветеранĕсемпе те тĕл пулнă, унта Тăвай муниципалитетĕнчи агропромышленноç ветеранĕсем те пулнă.
- Чăваш Енре хăй тĕллĕн ĕçлекенсен тупăшĕ 1,5 хут ӳснĕ. Регион бюджечĕ пĕрремĕш çур çулта тупăш енĕпе 48,7 млрд тенкĕлĕх пурнăçланнă. 2024 çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан харпăр хăй тĕллĕн ĕçлекенсенчен налук 9,7 процент ытларах кĕнĕ.

**Раиса ШУМОВА**
**хатĕрленĕ**




## Хисеплĕ вулакансем!

**«Ял ĕçченĕ» хаçата 2025 çулхи иккĕмĕш çур çулшăн çырăнтарасси малалла пырать.**
**Ăна почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсем урлă 3 уйăхлăха илсе тăмашкăн 337 тенкĕ те 98 пус тӳлемелле.**
**Альтернативлă йĕркепе редакцие килсе е кооператорсен магазинĕсем урлă тăвата уйăха çырăнмалли хак – 240 тенкĕ.**

14 СЕНТЯБРЯ ЛДПР
ВЫБОРЫ ГЛАВЫ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ



# ВЫБИРАЙ СИЛУ! ПРАВДУ!

## КОНСТАНТИН СТЕПАНОВ

ЛДПР

Предвыборный агитационный материал разместил на бесплатной основе кандидат на должность главы Чувашской Республики Константин Олегович Степанов




# ОЛЕГ НИКОЛАЕВ

АВАЛЛĂХА УПРАСА ЧĂВАШ ЕНЕ АТАЛАНТАРАТПĂР!

СОХРАНЯЯ ТРАДИЦИИ, РАЗВИВАЕМ ЧУВАШИЮ!

Предвыборный агитационный материал разместил на бесплатной основе кандидат на должность главы Чувашской Республики Олег Алексеевич Николаев

РОССИЙСКАЯ ЭКОЛОГИЧЕСКАЯ ПАРТИЯ ЗЕЛЁНЫЕ

# СОЦИАЛЬНАЯ СПРАВЕДЛИВОСТЬ И УЛУЧШЕНИЕ КАЧЕСТВА ЖИЗНИ

## Владимир САВИНОВ

Председатель Совета Регионального отделения в Чувашской Республике Политической партии «Российская экологическая **партия «ЗЕЛЁНЫЕ»**.



Близятся выборы главы Чувашской Республики: избиратели стоят перед важным выбором руководителя: которому доверят будущее своего региона. Председатель Совета Регионального отделения в Чувашской Республике **Политической партии «Российская экологическая партия «ЗЕЛЁНЫЕ» Владимир Савинов** предлагает свое видение развития территории с акцентом на экологию, социальной справедливости и улучшении качества жизни людей.

Предвыборный агитационный материал разместил на бесплатной основе кандидат на должность главы Чувашской Республики Владимир Сергеевич Савинов

# Владимир ИЛЬИН,

**кандидат на должность Главы Чувашии от ПАРТИИ ПЕНСИОНЕРОВ, генеральный директор ООО «Чувашлифт»**

ПАРТИЯ ПЕНСИОНЕРОВ

**Уважаемые земляки!**
**Дорогие избиратели!**

Я представляю на выборах Главы Чувашии **ПАРТИЮ ПЕНСИОНЕРОВ** и всех вас пенсионеров, предпенсионеров, будущих пенсионеров, ваших детей и внуков.

**ПАРТИЯ ПЕНСИОНЕРОВ** — это партия тех, кто помнит о том, кто строил, кто не сдался. Пенсионеры — не в прошлом, пенсионеры — в настоящем. И они требуют не жалости, а справедливости и признания своей роли.



**ПАРТИЯ ПЕНСИОНЕРОВ** — это не только про пенсии. Это про справедливость, про уважение, про здравый смысл. Мы предлагаем конкретные решения. Поддержка семей, защита прав пожилых, борьба с бедностью, восстановление доверия к власти — все это часть нашей программы. Мы не делим людей по возрасту, мы работаем для всех, кто хочет достойной жизни.

**ПАРТИЯ ПЕНСИОНЕРОВ** — это не про возраст. Это про ответственность. Мы за справедливость, за уважение к труду, за сильное государство, которое служит людям, а не наоборот. Мы верим, что Россия держится на тех, кто работает, учит, лечит, защищает, а не ворует, бездельничает и врет. Мы знаем цену настоящему патриотизму, потому что в партии те, кто с оружием в руках защищал Родину, кто спасал жизни, кто поднимал страну из руин.

**ПАРТИЯ ПЕНСИОНЕРОВ** — это не только про старших. Это про всех. Потому что мы знаем: защищая старшее поколение, мы строим безопасное будущее для младших. Потому что у страны с памятью есть будущее. Потому что уважение — это не «бонус», а норма.

**Поддержите на выборах меня и в моем лице самих себя и ПАРТИЮ ПЕНСИОНЕРОВ! Вместе мы способны на перемены, которые сделают нашу Республику лучше! Каждый ваш голос — это не просто бюллетень — это доверие! Это шаг к тому, чтобы гордиться страной!**

Предвыборный агитационный материал разместил на бесплатной основе кандидат на должность главы Чувашской Республики Владимир Дмитриевич Ильин

ПАРТИЯ

# НОВЫЕ ЛЮДИ



**СДЕЛАЙТЕ ПРАВИЛЬНЫЙ ВЫБОР 14 СЕНТЯБРЯ 2025 ГОДА**

**НА ВЫБОРАХ ГЛАВЫ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ ЗА КАНДИДАТА ОТ ПАРТИИ «НОВЫЕ ЛЮДИ» - МАКСИМА ВИКТОРОВИЧА МОРОЗОВА!**

14 сентября - день, когда ВЫ решаете судьбу нашей Республики. Представьте Чувашию, где каждый чувствует уверенность в завтрашнем дне. Эту реальность уже создает Максим Викторович Морозов - кандидат от НОВЫХ ЛЮДЕЙ.

Успешный предприниматель, он уже доказал, что умеет превращать идеи в результаты. Когда вы опускаете бюллетень за Морозова, вы выбираете не просто человека - вы выбираете команду, которая действует, а не обещает. НОВЫЕ ЛЮДИ - это свежая энергия, независимость от старых схем и прямая связь с вами. Присоединяйтесь к тем, кто уже сделал выбор в пользу перемен. Ваш голос - ваша сила!

**ЗНАЕТ, ЧТО НАДО РЕСПУБЛИКЕ!**
**Чăваш еншĕн кирлĕ çын!**

МАКСИМ
# МОРОЗОВ

Предвыборный агитационный материал разместил на бесплатной основе кандидат на должность главы Чувашской Республики Максим Викторович Морозов

СЕНТЯБРĔН 14-МĔШĔ – ПĔРЛЕХИ САСĂЛАВ КУНĔ

# Пурте суйлава хутшăнар

Эпир çитес эрнере Чăваш Республикин Пуçлăхне суйлатпăр.

Суйлав 3 куна тăсăлать: сентябрĕн 12–14-мĕшĕсенче иртет.




Суйлав участокĕсем 8 сехетрен тытăнса 20 сехетчен ĕçлеççĕ.

Сасăлама пынă чухне хăвăрпа пĕрле паспорт илме ан манăр.

Пĕрлехи сасăлав кунĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхне суйланма регистрациленĕ 5 кандидатран чи тивĕçлĕ 1 кандидата суйлăпăр.

Сасăлава виçĕ кунта ирттерни çынсем суйлав участокĕсенче йышлă пухăнса каясран тата суйлавçăсене хăйсемшĕн меллĕ вăхăтра суйлама пулăшас тĕллевпе тунă.

Округ территорийĕнче 24 суйлав участокĕ.

Суйлав участокĕсене пырайман çынсем, çакăн пирки вĕсем комиссие кам урлă та пулин пĕлтернĕ пулсан, ун пек суйлавçăсем патне суйлав комиссийĕн членĕсем килĕсене çитсе сасăлаттарĕç.

Çынсем хăйсен гражданла тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласса, пурте суйлава хутшăнасса шанса тăратпăр.

**Валентина БЕЛОВА,**
**Тăвай территори суйлав комиссийĕн ертӳçи**

ĔÇ ПАТТĂРĔСЕМ

# Раççейри чи лайăх 10 доярка хушшинче



**Кăçал «Акконд-агро» фирма акционерлă общество операторĕ Екатерина Григорьева** (сăн ӳкерчĕкре) **республикăри конкурсра çĕнтерчĕ.**

Чăваш Ен чысне Раççейре хӳтĕлесе Владимир облаçĕнче иртнĕ машинăпа ĕне сăвакансен тупăшăвне хутшăнчĕ. Кунта та хăйĕн професси ăсталăхне кăтартрĕ «Акконд» предприятири маттур хĕрарăм: тивĕçлипех ТОП-10 йышне кĕчĕ.

Ку çеç те мар, Екатерина Геннадьевнана тепĕр савăнăçлă хыпар та кĕтрĕ. Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата ял хуçалăх аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн «Раççей Федерацийĕн АПКан «Хисеплĕ ĕçченĕ» ят парса чысланă.

**Раиса ШУМОВА**

# Икĕ хут ытларах ĕç тума палăртатпăр

**«Конкуренцире чи вăйлисем çĕнтереççĕ»,– ку вăл Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев калани. Чăваш Ен çитес 5 çулта мĕнлерех пулĕ? «Пĕтĕмĕшле сăмахсемпе калас пулсан, тепĕр пилĕк çултан пирĕн республика тата çирĕп аталанĕ, çынсене кунта пурăнма меллĕ, хăтлă тата хăрушсăр та шанчăклă пулĕ. Пурнăç пахалăхĕн никĕсĕ – экономика аталанăвĕ. Иртнĕ çула эпир регионăн шалти пĕтĕмĕшле продукчĕн 600 миллиард ытла тенкĕлĕх калăпăшĕпе вĕçлерĕмĕр. 2030 çул тĕлне çак виçене пĕр триллион тенкĕне çитересшĕн», –тенĕ Олег Алексеевич.**

Электромеханика отраслĕ – пирĕн флагман. Тĕллев – ку енĕпе лидер пуласси. Малалла – машиностроени. Эпир пысăк тракторсем тăвас енĕпе вăйлă ĕçлетпĕр. Халĕ пĕчĕкрех хăватлисем тăвассине те алла илетпĕр. Коммуналлă хуçалăх тата ял хуçалăхĕ валли те тракторсем кăларатпăр.

Тепĕр çул-йĕр – хими. Станоксем туса кăларасси те çĕршывăн технологи суверенитечĕшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă вăл, ытларах пиравăр станокĕсем кăларатпăр. Иртнĕ пилĕк çулта республика промышленноçа пулăшу парассине, ун пирки маларах та çырнăччĕ хаçатра, 30 хут ӳстернĕ. Промышленноç çитĕнĕвĕсем паян – пирĕн пĕрлехи çĕнтерӳ. Ăна аталанма малашне те пулăшасса шантарнă республика ертӳçи.

Чăваш Ен ял хуçалăхĕ вăйлă аталаннă регион шутланать. «Паян эпир республикăна тĕп апат-çимĕçпе туллин тивĕçтертĕмĕр. Çĕршывра кун пек регионсем чăннипех сахал»,– палăртнă Олег Николаев. Çĕр улмине хамăра кирлинчен икĕ хут ытларах туса илетпĕр. Çăмарта – усă курнинчен 135 процент ытларах. Çитес çулсенче ку кăтарту 150–160 процента çитессе, ку енĕпе хушма производствăсем хута каясса шанать.

Паян эпир севок сухан туса илессипе те малта. Сăмах майăн асăнсан, пирĕн Тăвай округĕнчи Андрей Кузнецов фермер та 5 гектар çинче çитĕнтернĕ ăна. Республика хур какайне кăна мар, «макулинская» ăратлă хурăн çăмартисене те сутать. Хăмла туса илессипе тата ăна тирпейлессипе те Раççейре малта пыратпăр. Тĕллев – хăмла пахчине 2 пин гектара çитересси, çуллен 3700 тонна таран хăмла туса илме тытăнасси. Комбайнсене, сушилкăсене, ытти оборудование те йăлтах хамăрăн предприятисенче туса кăларăççĕ. Вĕсемпе ытти региона та тивĕçтерме майсем пур.

Продукци экологи тĕлĕшĕнчен таса пулни те питĕ пĕлтерĕшлĕ. Пирĕн хурт-хăмăрçăсем, сăмахран, «Чăваш пылĕ» бренда регистрациленĕ. Чăваш пылĕ уйрăлса тăрать, ăна урăхларах туса илме тата хитре савăтсемпе яма пуçланă.

«Кашни хăйĕн ĕçĕнче чи лайăххи пулма тăрăшмалла. Эпир производствăра пысăк квалификациллĕ ĕç вырăнĕсем тăватпăр-тăк конкуренцире мала тухма пултаратпăр. Пирĕн экономикăна Раççей Президенчĕ палăртнă наци тĕллевĕсене тивĕçтермелле аталантармалла. Çĕршыва пирĕн компетенцисем кирлĕ пулччăр.

Социаллă сфера та малта пулмалла. Илĕпĕр, вĕрентĕве. Вăл – çыншăн пурнăçри вырăнне тупмалли, аталанмалли çул-йĕр. Çавăн пекех – экономикăна витĕм кӳмелли, ĕçлеттермелли никĕс те. Чăваш Енре пилĕк çулта çĕнĕ 9 шкул тата 24 ача сачĕ хута янă. 6 шкул строительстви малалла пырать. 111 пĕлӳ çуртне, 38 садике, 94 шкулăн стадионне тĕплĕн юсанă. Çитес 5 çулта тата ытларах юсаса çĕнететпĕр, тенĕ Олег Николаев. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта тата Кӳкеçре 3325 вырăнлăх виçĕ çĕнĕ шкул уçăлнă. Чăваш Енре кашни кун 1–11 класcенче вĕренекен 13,5 пин ача 407 шкул автобусĕпе усă курать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн, сăмахран, Çĕнĕ Пуянкассинчи вăтам шкула та çĕнĕ шкул автобусĕпе тивĕçтернĕ. Производствăна тата республикăна пĕтĕмĕшле аталантарас тĕллевпе вузсен хушшинчи кампуса тăвас енĕпе хастар ĕçленине те палăртнă Чăваш Ен Пуçлăхĕ. Пулас çамрăк специалистсем ăслăлăхпа тĕпчев, сăнавсемпе конструктор ĕçĕсене хастар хутшăнĕç. Вĕсем аслă шкулсенчен производствăсене кайĕç.

Çын пурнăçне пысăк витĕм кӳрекен тепĕр отрасль вăл – сывлăх сыхлавĕ. «Манăн шухăшăмпа,– тенĕ Олег Николаев,– чăваш медицини – çĕршывра чи лайăххисенчен пĕри. Çакна рейтингсем те çирĕплетеççĕ. Цифровизаци енĕпе эпир малтисен йышĕнче. Тин çуралнă ачасен пурнăçне упраса хăварассипе нумай çул пĕрремĕш вырăнта пыратпăр. Пирĕн медицинăра харпăр хăй отраслĕнче малта пыракан специалистсем вăй хураççĕ. Ытти нумай çул-йĕрпе те лайăх шайра».

Сывлăх сыхлавĕнче çак йĕркене пăхăнса ĕçленине палăртнă республика ертӳçи: пĕрремĕшĕ – чирсене профилактика тăвасси тата вĕсене чи малтанхи тапхăрта тупса палăртса вăхăтра медицина пулăшăвĕ парасси. Чи кирли – диспансеризаци тухни. Чирсене малтанхи тапхăртах тупса палăртас тĕллевпех кăçал «Сывлăх патне – утăм» проект пуçарнине калана.

Иртнĕ 5 çулта республикăра ФАПсем, амбулаторисем, поликлиникăсем тăвас, васкавлă пулăшăва тата санитари авиацине аталантарас енĕпе нумай ĕçленĕ. Çакна пирĕн Тăвай округĕн тĕслĕхĕсенчен те курма пулать.

– Халĕ регионсем хушшинчи пысăк технологи пулăшăвĕ паракан медицина центрĕсем тăватпăр. «Сывлăх сыхлавĕнчи кăтартусем савăнтараççĕ. Республикăра пурăнакансен ĕмĕрĕ 3 çул тăсăлчĕ. Çак кăтартăва 5 çула çитересшĕн»,– хăйĕн шухăш-тĕллевне пĕлтернĕ Олег Алексеевич. Паллах, врачсемпе, ытти медицина кадрĕсемпе тивĕçтересси те лайăхланса пырать.

Халăхăн пурнăç шайне çĕклес енĕпе малалла та çине тăрса ĕçлессине пусăм тунă Чăваш Ен Пуçлăхĕ. «Нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсене хăтлăх кĕртĕпĕр, çулсем тăвăпăр, çутăпа ытларах тивĕçтерĕпĕр, спорта аталантарăпăр тата ытти те. Халăхшăн усăллă проектсене пурнăçа кĕртĕпĕр. Пирĕн пĕчĕк Тăван çĕршыв аталанăвĕшĕн малтанхи 5 çултипе танлаштарсан тата икĕ хут ытларах ĕç тума палăртатпăр. Хамăр ума çакăн пек çирĕп тĕллевсем лартатпăр. Вĕсене «Чăваш Ен-2030» аталану программине кĕртнĕ. Пирĕн тĕллев – ăна, тăван çĕре, чечекленсе хăтлăланнăскере, ачасемпе мăнуксене парасси. Çакăнта эпĕ хамăн тивĕçĕме те куратăп»,– палăртнă Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев.

**Иван ГЛАДКОВ**

# Пире шкул йыхравлать, пĕлӳ парать, çын тăвать

**Сентябрĕн 1-мĕшĕнче, Пĕлӳ кунĕнче, Тăвай муниципалитет округĕнчи шкулсем вĕренекенсене хапăл туса кĕтсе илнĕ. Кăçал шкул парттисем хушшине пĕрремĕш класа каякан 75 ача ларчĕ, пурĕ вара округри шкулсенче 1140 вĕренекен пĕлӳ пухĕ. Çак ятпа округ администрацийĕн представителĕсем, вырăнти депутатсем шкулсенчи савăнăçлă линейкăсене хутшăннă, шкул ачисене, ашшĕ-амăшне тата вĕрентекенсене çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа, Пĕлӳ кунĕпе саламланă. Эпир хамăрăн ачасене шанатпăр тата вĕсене вĕренӳре пур енĕпе те пулăшса пырăпăр, тенĕ.**



Сентябрĕн 1-мĕшĕ – хаваслă та хумханullă, малашлăха алăк уçакан кун! Шăпах çак кун кашни шкул ачин пурнăçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланнипе палăрса тăрать. Çавăнпа Совет Союзĕн Геройĕ П.Х.Бухтулов ячĕллĕ Тăвайри вăтам шкулăн картишĕнче йăлана кĕнĕ линейкăна пухăннă та учительсемпе вĕренекенсем, вĕсен ашшĕ-амăшĕпе хăнасем. Ăна талантлă музыкант И.И.Совин ертсе пынипе вĕрсе каламалли инструментсен оркестрĕ патшалăх гимнĕсене каланипе уçнă.

Пĕлӳ кунĕ ячĕпе пухăннисене шкул директорĕ Е.Н.Моряков, Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ О.А.Ломоносов, Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин ертӳçи А.В.Шакин, район прокурорĕн заместителĕ К.Д.Старотерпцев, Тăвай территори уйрăмĕн начальникĕ Н.И.Сормов, вăтам шкулăн управляющи Канашĕн председателĕ Э.В.Степанова, шкулта вĕренекенсен ашшĕсен Канашĕн председателĕ Н.Ю.Перцев саламланă.

Пĕрремĕш класа вĕренме пынисене уйрăм тимлĕх уйăрнă, вĕсем шкул пурнăçĕ пуçланасса чăтăмсăррăн тата пăлханса та савăнса кĕтнĕ. Йăлана кĕнĕ йĕркепе кĕçех Пĕлӳ çĕршывне йыхравлакан пĕрремĕш шăнкărав янăранă, çак чыса пĕрремĕш класра вĕренме пуçлакан А.Перцевпа Е.Шартова, шкултан вĕренсе тухакан А.Ивановпа С.Соколов тивĕçнĕ.

Пĕрремĕш классене вĕрентекенсем Н.Н.Васильева тата Э.Н.Ларионова ырă сунса калаçни те илем кӳнĕ мероприятие. Ашшĕ-амăшĕ те саламлă сăмахсем каланă, тӳпене ĕмĕтпе тулнă шарсем вĕçтернĕ.

Линейка хыççăн Тăван çĕршыв хӳтĕлевçин çулне халалланă малтанхи уроксем пуçланнă. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çĕнĕ хавхаланупа çĕнĕ çитĕнӳсем кӳтĕр, çунатлă ĕмĕтсем пурнăçа кĕрсе пыччăр!

# Вĕренӳ çулĕ умĕн – чиркӳре

**Кашни çулах йăлана кĕнĕ йĕркепе çуллахи каникулăн юлашки кунĕсенче ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле шкул ачисем Енĕш Нăрвашри Çветтуй Василий ячĕллĕ чиркӳре пухăнаççĕ.**



Иртнĕ канмаллире Георгий атте Аслă Турăран пил илсе, вĕренӳ çулне ăнăçлă ирттерме кĕлĕ ирттерчĕ. Нумайăшĕ сăвапланă шыва ăша илчĕ. Вĕренсе тарăн пĕлӳ пухма, спортпа туслă пулма, аслисене, вĕрентекенсене итлеме, ырă ĕçсем тума сунчĕ чиркӳ настоятелĕ Георгий атте.

**Надежда ЧЕРНОВА,**
**ял старости**

# Манăн ял - манăн тăван кил

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

# «Эпĕ пĕччен мар – халăхпа. Çакă савăнтарать»



**Юлашки çулсенче Тăвай тăрăхĕнчи ялсен сăнсăпачĕ палăрмаллах çĕнелсе пырать. Иртнĕ уйăхра республика Пуçлăхĕ Олег Николаев пирĕн округа ĕçлĕ çул çӳревпе килсен çитĕнӳсене курса, тĕрлĕ проектсене пурнăçлас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçленине палăртрĕ. Ĕçе хаклани патшалăх пулăшăвĕпе усă курса малашлăхра та çынсен ырлăхĕшĕн тăрăшасси тĕп тĕллев пулнине пĕлтерчĕ округ ертӳçи Олег Ломоносов.**

**«Ниме – халăх бюджечĕ» пуçаруллă программăна ырласа халăх хăйĕн тӳпине хывать пĕрлехи ĕçе. Аталану çулĕпе пырса кăçал Тăвай округĕнче 89 проекта ĕçе кĕртме палăртнă, паянхи кун тĕлне 79 ĕç-хĕле пурнăçланă ĕнтĕ, çав шутран 7-шĕ – Йăнтăрчă ял территори уйрăмĕнче. Унăн ертӳçи Александр Карсаков умри тĕллевсене халăхпа килĕшсе, канашласа тунинче ял старостисен тӳпи пысăк пулнине палăртрĕ.**

**Йăнтăрчăри Ирина Геннадьевна Евдокимована, Тенеялĕнчи Валерий Николаевич Ананьева, Улянкăри Елена Аркадьевна Петрушована ырăпа асăнчĕ.**

Паянхи калаçу тĕпелне Улянкă ял старостине чĕнтĕмĕр. Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă, тенĕ ĕлĕкех ватă çынсем. Пысăках мар ял округ центрĕнчен 5 çухрăмра вырнаçнă. Вăйпиттисенчен ытларахăшĕ Тăвайри тĕрлĕ ĕç тытăмĕнче тăрăшать. Шупашкара, Вăрмара Улянкă витĕр автобус çӳрени те меллĕ ял халăхĕшĕн. Кашни кил умĕнче çăмăл машина, хăшĕсен темиçе те. Регион пĕлтерĕшлĕ асфальтлă çул тикĕс те пахалăхлă, паллах. Шаларах кĕрсен мĕнле ӳкерчĕк-ши? Аталану çулĕпе еплерех ĕмĕт-шухăшсемпе утаççĕ улянкăсем? Пуçару проекчĕпе мĕнле ĕçсем пурнăçланă?

– Паллах, çĕршыв малашлăхĕ, ялсен пуласлăхĕ – çамрăксенче. Каç пулттипе ялăн аслă Николаев урамĕпе коляска туртса утакан çамрăк амăшĕсене курсан, скандинави уттине кăмăллакан 70–80 çултан иртнĕ, хăшĕ-пĕри 90 çул урлă та каçнă хисеплĕ ветерансенчен: «Ял пурăнать-ха, сӳнмест, çуралнă вырăнах юратаççĕ апла пирĕн çамрăксем тенине илтсен чун хĕпĕртет,– пуçларĕ калаçăвне Елена Аркадьевна. – Пĕлтĕр пирĕн ял территорийĕнче кун çути курнă 7 ачаран 4-шĕ – Улянкăран. Йăнтăрчă территорийĕнче пĕтĕмпе 1119 çын пурăнать, вĕсенче 618 кил-хуçалăх шутланать. Паллах, пушă çуртсем те çук мар-ха. Ашшĕ-амăшĕн кил паçмисене дача вырăнне усă куракансем те, пенсие тухса ялта пурăнма кăмăл тăвакансем те сахалах мар. Ĕçлекенсем те пур».

Пуçаруллă бюджет программи яла чылай хăтлăх кӳни курăнать. Ача-пăча кану лапамĕнче шăпăрлансен хаваслă вăйă-кулли илтĕнсе тăрать. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин паттăрĕсене асăнса лартнă палăка çĕнетнипе ял халăхĕ кăмăллă: вăрçă участникĕсен спискне халĕ çĕнтерӳпе таврăннисен те, çапăçу хирĕнче пуç хунисен хушамачĕсене те кĕртнĕ. Вĕсене пуçару проекчĕпе тунине асăнчĕ ял старости.

Территори уйрăмĕпе илес пулсан, 2024 çулта Йăнтăрчăра Гагарин урамне 230 метр чухлĕ вак чул сарса хытарнă, кӳлĕ тасатнă. Тенеялĕнчи масарта çынна пытарнă чух кĕрсе тăмалли тăрăллă вырăн тунă, çăва патне çитмелли 270 метр çула юсанă. Çавăн пекех ял урамĕнчи çутă тытăмне, А.Егорова ячĕллĕ урамри 270 метр çула çĕнетнĕ. Тăван тăрăха юратнине кăтартса ун аталанăвне хулари ентешсем хутшăнни пысăк тĕрев. Тенеяльсем «Акконд» общество ертӳçине В.Н.Иванова ăшшăн тав сăмахĕ калаççĕ тĕрлĕ пулăшушăн».

Елена Петрушкова халăх тарçин тилхепине 4 çул ытла çирĕппĕн тытать. Хăй вăхăтĕнче Людмила Михайлован ĕçне тивĕçлипе хакласа «Республикăри чи лайăх староста» кубокпа наградăланине асăнчĕ вăл. Шел, коронавирус чирĕ вăхăтсăр татрĕ педагог-ветеранăн кунçулне. Çав çулсенче хĕрарăмсен советне ертсе пынă Елена Петрушкована шанчĕ ял халăхĕ çак яваплă ĕçе. Маларах та, общество ĕçне чунтан парăнса, ял пуласлăхĕшĕн пĕрле вăй хунă пулнă вĕсем.

«Староста ĕçĕнче чи пĕлтерĕшли – халăхпа пĕр чĕлхе тупма пĕлни, вĕсене хумхантаракан ыйтусене çывăха илсе пулăшма тăрăшни пулĕ тетĕп»,– пĕлтерчĕ Елена Аркадьевна. Халиччен централизациленĕ шыв тытăмĕ пулманни ял çыннисемшĕн чăрмав кăларса тăратнă. Тарасасенчен, çăлсенчен ăсса пурăннă. Улянкăсем иртнĕ çул пуçаруллă бюджет программине хутшăнса халăха таса шывпа тивĕçтерес ыйтăва татса панă. Канăçа çухатсах ĕçе кӳлĕннĕ Елена Петрушкова староста та ку тĕлĕшпе Йăнтăрчă территори уйрăмĕн администрацийĕпе пĕрле. Халăхпа канашланă. Çынсем сасăласа хăйсен шухăшне пĕлтернĕ. Проект хакĕнчен 10 процентне халăхран пуçтармаллине шутласан, çак сумма миллиона яхăн тенкĕ пулнă. Ял хастарĕсем пулăшнипе ăна вăхăтра пухса парса, подрядчик ĕçе пуçăннă. Регион тата вырăнти бюджетсенчен проекта ĕçе кĕртме 8 млн тенкĕ ытла хывнă. Ял урамĕсене пăрăхсем хурса, чылайăшĕ килĕсене кĕртнĕ. Пурте шывĕ çемçе, тутлă пулнине палăртаççĕ. Паллах, пăшăрханмалли самантсем те пулнах ĕнтĕ старостăшăн.

– Эпĕ пĕччен мар, мана халăх шанать, çакна туйса тăратăп тата çакă савăнтарать,– хуравларĕ хĕрарăм çирĕп кăмăл-туйăмпа.

Çул-йĕр пурнăç артерийĕ, тесе ахальтен каламаççĕ. Пуçаруллă бюджетăн пысăк пулăшăвĕ ял урамĕсенчи çулсене хытă сийпе витсе такăрлатма май панă. Куншăн çынсем кăмăллă. Хăйсем тăрăшнипе йĕркелеççĕ-çке ял хăтлăхне. Çапла майпа темиçе çул хушшинчех пылчăкпа çăрăлнă урамсем такăрлanса çĕнелнĕ. Тен, малашлăхра асфальтлă сийпе те витĕнĕç-ха ял урамĕсем, тротуарсем хывĕç? Шанăçпа пăхаççĕ пуласлăха ял çыннисем.

– Афган вăрçин паттăрĕ Володя Семенов ячĕллĕ хамăр пурăнакан урама вара черет иртнĕ уйăхра çеç çитрĕ. Чайка урамне кăçал çул-йĕр фондĕнчи укçатенкĕпе лайăхлатнă. Халĕ ялта Винокуров урамне вак чул сарса юсамалли кăна юлнă. Кирек мĕнле ĕç пуçарсан та вăл маншăн пĕлтерĕшлĕ,– терĕ тăван ялшăн çунакан хĕрарăм.– Çынсем харсăр, пултаруллă пирĕн. Çакă пысăк тĕрев. Малтанах Тăвай муниципалитет округĕн депутатсен Пухăвĕн депутатне Тимофей Иванова, Николай Иванова, Анатолийпе Александр Семеновсене тата ыттисене ырăпа асăннă пулăттăм. Тивĕçлĕ канури Людмила Григорьевна Петрована, Татьяна Александровна Иванована общество ĕçĕнчи хастарлăхшăн халăх сума сăвать.

Кăçал çуркунне иртерех килчĕ, çĕр час типрĕ. Ялти общество вырăнĕсене, масара тирпейлес терĕмĕр, харăсах 30–40 çын явăçрĕ пĕрлехи ĕçе. Ачипăчи те юлмарĕ. Ниме-субботниксенче ĕç вĕресе тăчĕ. Хăйсен транспорчĕпе, ĕç хатĕрĕсемпе хутшăнчĕç тирпей-илем ĕçĕсене.

Йышпа ĕçленипе пĕрлех пахалăхлă канни те аван. Юрать, «Мерчен» ансамбль пур пирĕн ялта. Вăл округри кăна мар, регион пĕлтерĕшлĕ мероприятисене хутшăнать. Иртнĕ уйăхра маттур юрăçсем Ирина Евдокимова активисткăна 60 çулхи, августăн 23-мĕшĕнче йĕкĕрешсене – Вера Лаптинăпа Любовь Петрушкована 65 çулхи юбилейĕсемпе саламланă. Сăмах май, вĕсем виççĕшĕ те тивĕçлĕ канура пулсан та ялти культура вучахне сӳнме памаççĕ. Юбилярсене пĕчĕк концертсемпе савăнтарассине ырă йăлана кĕртнĕ мерченçĕсем. Ватăсем патне килĕрен çӳресе çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Йăлана кĕнĕ тăрăх, Улянкăра Çимĕк каçĕ кашни касран чăваш тумĕ тăхăннă хĕрсем карталанса тухса аслă лапама вăййа пуçтарăннă. Аваллăхпа хальхи пурнăç вырăнĕ кунта. Вырăнти эткерлĕх пуянлăхне кăтартса, пулас ăру валли упраса хăварассине тĕллеве хуни, паллах, çутă тĕслĕх. Пĕлтĕр «Мерчен» ушкăн Республика кунĕнче Тăвайри краеведени музейне уçма хутшăннă, Чăваш наци телевиденийĕ ӳкерсе илнĕрен вĕсен юрри-кĕввипе пĕтĕм республикипех паллашнă.




«Ятарлă çар операцийĕ пынăран вăййа тухас темерĕмĕр кăçал та»,– пĕлтерчĕ ял-йыш шухăшне староста.

СВОри ентешсене пулăшса ытти ялтисенчи пек хӳтĕлев хатĕрĕсем çыхассине йĕркелемен пулсан та, хĕл кунĕсенче хĕрарăмсем алса-нуски çыхса отпуска килнĕ салтаксем урлă темиçе хутчен те посылка парса янă. Пыл хурчĕсем усракан Петрушковсем пысăк савăтпах пылак çимĕçне çитернĕ салтаксем патне. Ытти пулăшуран та айккинче тăмаççĕ улянкăсем. Йăнтăрчăра кăсал СВО участникĕсене халалласа йывăçсен аллейине уçнă.



Харсăр старостăпа хăйĕнпе çывăхрах паллашар-ха. Елена Аркадьевна çак ял хĕрех. Вăтам шкул хыççăн хулара 3 çул ĕçлесен чунĕ тăван енех туртнă, Тăвайри çыхăну узелне вырнаçса мĕн пенсие тухиччченех телефонисткăра ĕçленĕ. Ялти маттур йĕкĕтпе Едисий Алексеевичпа çемье çавăрнă, 3 хĕр ӳстернĕ. Мăшăрĕ райпон напиток цехĕнче, çăкăр заводĕнче механикра тăрăшнă. Ĕçри хастарлăхĕшĕн Едисийпе Елена Петрушковсене темиçе хутчен те Хисеп хучĕсемпе чысланă.

«Хамăр аслă пĕлӳ илеймерĕмĕр, ачасене вĕрентсе кăларма тăрăшатпăрах»,– тесе çирĕп тĕллев лартрăмăр мăшăрпа. Мĕн ĕмĕтленни-палăртни пурнăçланнă. Виçĕ хĕр пĕрчийĕ те алла диплом илнĕ. Наташа – шăл врачĕ, çурçĕрте ĕçлесе пурăнать. Полина – Мускаври аслă шкулта технолога вĕреннĕ. Оксана Раççей правительстви çумĕнчи вузра пĕлӳ илнĕ, ертсе пыракан инженер. Ытарайми 4 мăнукĕ – чун киленĕçĕ уншăн. Çăвăпех ялта ирттереççĕ каникул кунĕсене. Дария мăнукĕ медицинăна суйланă, стоматолог пуласшăн. Ыттисем шкултан хăпайман-ха, лайăх вĕренсе савăнăç кӳреççĕ юратнă кукамăшне.

Шел те, 46 çул шăкăл-шăкăл пурăннă хыççăн, иртнĕ çул Еленăн мăшăрĕ вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. 70 çул та тултараймаччĕ. Пысăк хуйха чăтса ирттерме çăмăлах пулмарĕ хĕрарăма. Юнашар çывăх çынсем, тус-юлташсем пулни, мал ĕмĕтлĕскер общество ĕçĕпе тимлени хуйха пусаратех ĕнтĕ. «Мерчен» хĕрĕсем те тунсăхлама памаççĕ.

– Елена Аркадьевна, хăй вăхăтĕнче хулана юлма та май пулнă вĕтха, кун-çулăра ялпа çыхăнтарнăшăн ӳкĕнместĕр-и?

– Чăнласах калатăп, Улянкă енрен хакли çук. Пылак çырлине те хамăр çĕр çинчех ӳстерет Владислав Кузьмин фермер. Çимĕç сĕткенĕ малашлăха шанăçпа пăхма вăй кӳрет. Ялти çырлаçăн кăçалхи тухăçĕ пĕлтĕрхинчен пысăкрах пулни те хавхалантарать.

–Умра тата мĕнле тĕллевсем-ши?

–Чун апачĕсĕр пурнăç кичем. Ял клубне тĕпрен юсамалла. Тăрринчен шыв каять, хăй вăхăтĕнче халăхпа чӳречисене улăштарма май килнĕччĕ. Пĕлтерĕшлĕ тепĕр самант – Комсомольски урамĕнчен Ленин урамне тухакан кĕпере юсасси. Унтан машинпа мар, хамăр та çуран аран каçса çӳретпĕр. Николаев урамне пăрăнса кĕнĕ çĕрти асфальтлă çул шăтăк-путăкланса кайнă. Шкул автобусĕ шăпах çакăнтан клуб умĕпе çаврăнса ачасене Тăвайне вĕренме турттарать. Кăçал пĕлӳ çуртне Улянкăран куллен 34 ача çула тухать.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев 5 çулхи ĕç-хĕл кăтартăвĕсемпе паллаштарнă чух, çапла калани асра юлнă: «Пĕр çын утать – йĕр юлать, çĕр çын утать – çул пулать». Ырă улшăну нумай, çакă ĕçлеме хавхалантарать. Пĕрлехи вăйпа вĕсене пурнăçлатпăрах.

**Раиса ШУМОВА**

**Анатолий МИХАЙЛОВ, Улянкăри ветерансен канашĕн председателĕ:**

– Елена Петрушкова пек хастарсем ялшăн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Ял шăпипе çыхăннă кирек мĕнле ыйтăва та общество пĕрлĕхĕсемпе пĕрле татса пама тăрăшатпăр. Паллах, пирĕн староста территори уйрăмĕн администрацийĕшĕн сылтăм алă вырăнĕнчех. Ял çыннисемшĕн авторитет вăл. Çавăнпа хисеплеççĕ, итлеççĕ ăна.

ИВАН СОЛОВЬЕВ ÇУРАЛНĂРАНПА 80 ÇУЛ ÇИТНĔ МАЙ

# Журналист, тĕпчевçĕ, общество хастарĕ

**Иван Иванович Соловьев хĕрĕх çул ытла тăван район хаçатне чунне парса ĕçлерĕ. Сăмаха çивĕч туякан, унпа тирпейлĕ усă куракан пултаруллă журналистсенчен пĕриччĕ пирĕн хушăмăрта. Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн килнĕ çут тĕнчене – 1945 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче Кивĕ Пуянкасси ялĕнче йышлă çемьере çуралнă. Ашшĕ-амăшĕ – колхозниксем. Амăшне астунă эпĕ, ашшĕне вара пĕлмен, вăл тăван ялĕнче колхоз председателĕ те пулнă.**



Иван Иванович Соловьев

Тăвайри вăтам шкула пĕтернĕ хыççăн Мордва патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Унтан вăл ют çĕршыв чĕлхин учителĕ, филолог пулса тухнă, тĕрлĕ çĕрте ют çĕршыв тата чăваш чĕлхисене, истори вĕрентнĕ ачасене.

1972 çулта ăна райхаçат редакцине чĕнсе илнĕ. Вăл çырусен пайĕн заведующийĕнче ĕçлеме пуçланă. Эпĕ Николай Алексеевич Кадикин тĕп редактор çине тăнипе хаçатра унран пĕр çул каярах – 1973 çулхи кĕркунне ял хуçалăх пайĕн литература сотрудникĕнче ĕçлеме тытăнтăм. Манăн та çырас туртăм пурччĕ, шкул саккинченех республикăри «Пионер сасси», «Хĕлхем» тата район хаçачĕсемпе çыхăну тытаттăм. Паллашрăмăр Иван Ивановичпа, туслашсах кайрăмăр. Апат вăхăчĕсенче унăн калавĕсене, ытти хайлавĕсене вулама, хак пама, кирлĕ пулсан, сĕнӳсем, тӳрлетӳсем кĕртме килнех каяттăмăр. Кашни йĕркене тенĕ пек тимлĕ, хавхаланса сӳтсе яваттăмăр, хăйне евĕр творчество вучахĕ витĕр кăларattăмăр. Хамăра та пулăшнă çакă малалла аталанма, сăмах вăйне-хăватне тата хакне туйма. Иван Ивановича çынсен хутшăнăвĕсем, ыркăмăллăх, туйăмсен çивĕчлĕхĕ яланах кăсăклантарнă, вĕсене хăйĕн хайлавĕсенче, хаçат страницисенче çутатса пама тăрăшнă. Пĕрлех професси ăсталăхне те çине тăрса алла илме, хаçат чĕлхине те пултарнă таран илемлĕ литература чĕлхи шайне çывхартма, чĕрĕлĕх пама тимленĕ.

Унăн «Гоголь-моголь тата палтус пуçĕ» фельетонне, Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем – «Красная Чувашия» тата «Новый путь» колхозсен мухтавлă председателĕсем Василий Данилович Даниловпа Демьян Александрович Александров, СССР халăх артистки Вера Кузьминична Кузьмина, Кивĕ Пуянкасси ялĕн историйĕпе Назаркка йăхĕ çинчен çырнă очеркĕсене вулакансем çывăха илнĕччĕ. Çавăн пекех – ытти вуншар статьяпа очерка, фельетонпа калава тата тĕрленчĕксене. Вăл çырнисене юратса вуланă, вĕсем çынсене хумхантарнă, паянхи пурнăçпа ыранхи çинчен шухăшлама вĕрентнĕ. Общество пурнăçĕнчи çивĕч ыйтусем халăха яланах пăшăрхантараççĕ, вĕсене пĕтермелли çул-йĕрсене тупма пулăшаççĕ.

Хаçатра вăл тĕрлĕ жанрпа ĕçлерĕ. Малта пыракан хуçалăх руководителĕсем, уй-хир ăстисем, артистсемпе учительсем, сывлăх хуралçисем çинчен çырнипе пĕрлех пурнăçăн тӳнтер енĕсене те çутатма манмарĕ. «Хаçатра çырнă хыççăн», «Пичет витĕмлĕхĕшĕн», «Çыру йĕрĕпе», «Мораль темипе» рубрикăсене тимлĕх уйăрнă. Ыттисемпе пĕрле «Йĕплĕ шăпăр», «Канмалли кун», «Кĕтне шевлисем» тата ытти страницăсем кăларса тăнă.

Вăй-халне пĕтĕмпех хаçата пама тăрăшнă. Обществăлла корреспондентсен çирĕп ушкăнĕ пурччĕ унăн кашни ялта тенĕ пекех. Вырăна тухса вĕсемпе тĕлпулусем йĕркелетчĕ редакци. Йĕркелĕх хуралçисемпе пĕрле çĕрлехи рейдсене сахал мар çӳренĕ. Пурнăçа мĕн чухлĕ те пулин лайăхлатассишĕн, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешнĕ. Редакторсем умĕнче кăна мар, райком секретарĕсемпе обком представителĕсем умĕнче те вăл ялан хăйĕн тĕрĕс сăмахĕ çинче тăратчĕ, хăйне танлă тытатчĕ.

Иван Иванович общество пурнăçне яланах хастар хутшăннă. 1988 çултанпа пай пуçлăхĕн тивĕçĕсене туса пынипе пĕрлех тĕп редактор заместителĕ пулса та тăрăшрĕ, яваплăхĕ татах ӳсрĕ. Вăл обществăлла корреспондентсен йышне хушассипе, çамрăк корреспондентсене журналистикăна çул уçса парассипе, вĕсене аслă шкулсене ярса вĕрентсе хатĕрлессипе те нумай тимлерĕ. Сахал мар çамрăк журналистикăна çул хыврĕ çав çулсенче. Хăшĕсем практикăна та хамăр хаçат редакцинех килсе çӳрерĕç, кунта тăрăшакан журналистсен пултарулăхĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен диплом ĕçĕсем те çырса хӳтĕлерĕç. Чи пахи – вĕсем паян кун та хаçат редакцийĕпе çыхăну тытаççĕ, май килнĕ таран пулăшаççĕ те.

И.И.Соловьев хăй те 1976 çултанпа СССР журналисчĕсен Союзĕн членĕ. Чылай çул журналистсен пĕрлĕхĕн республикăри правленийĕн членĕ пулчĕ. Республикăри хаçат-журналсемпе, вĕсенче ĕçлекен сотрудниксемпе туслă çыхăну тытрĕ. Хăй вăл, çакна вулакан та асăрханă ĕнтĕ, паянхи кунччен чăвашла та, вырăсла та ăста çырать. Хăй вăхăтĕнче, хаçатра ĕçленĕ çулсенче, пропагандист тивĕçĕсене те тăрăшса пурнăçласа пычĕ вăл, районта лекципе çитмен ял юлман та пулĕ унăн. Пĕррехинче, астăватăп, ĕç хыççăн Киччĕ ялне çил-тăмана пăхмасăр тухса кайрĕ. Тĕнчери лару-тăру çинчен лекцисем вуланă вăл. Унăн сăнне районти тата республикăри пропагандистсен Хисеп хăмисем çине те кĕртнĕччĕ. Чăваш Республикин Аслă суд заседателĕ пулнă май, тĕрĕслĕхе хӳтĕлерĕ. Ăста шашист-шахматист та вăл. Хаçатри хастарлăхшăн район, республика тата Раççей шайĕнчи Хисеп грамотисемпе, Тав хучĕсемпе темиçе хутчен те чысланă ăна.

Пĕрлех лайăх çемьеллĕ çын та: мăшăрĕпе, педагогика ĕçĕн ветеранĕпе Галина Михайловнапа, виçĕ ача пăхса çитĕнтерчĕç, вĕсене аслă пĕлӳ илме пулăшрĕç, сакăр мăнукпа пĕр кĕçĕн мăнук вĕсен халĕ.

Малашне те ырлăх-сывлăхлă, телейлĕ пулма çирĕп вăй-хал, вăрăм кун-çул, пысăк хастарлăх сунатпăр сана, Иван Иванович! Ĕмĕтӳсем пурнăçланса пыччăр.

**Иван ГЛАДКОВ**

# Пурнăç тĕллевĕ: «Малалла – çĕнтерӳ патне!»

**Вăрмар тата Тăвай районĕсен хаçачĕсен («Хĕрлĕ ялав», «Ленинец») редакторĕ, асăннă районсен радиовещани редакцийĕсен ĕçĕсене йĕркелесе яраканĕ тата пĕрремĕш редакторĕ пулнă Герман Матвеевич Матвеев журналист çуралнăранпа кăçал 100 çул çитни çинчен çырнăччĕ ĕнтĕ хаçатра. Вăл çуралса ӳснĕ Тикаш ялĕнчи культура çуртĕнче августăн 21-мĕшĕнче ăна халалланă асаилӳпе пултарулăх каçĕ иртрĕ.**

Кăçал пирĕн çĕршыв Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 80 çул çитнине паллă турĕ. Маларах пухăннисем вăрçăра пуç хунисене асăнса лартнă ялти Астăвăм палăкĕ умне чĕрĕ чечексем хучĕç.

Мероприятие библиотека заведующийĕ Ираида Николаевна Иванова уçрĕ. Вăл Герман Матвеев журналистăн пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе паллаштарчĕ.

Тĕлпулăва Шупашкартан ятарласа килнĕ Галина Александровна Максимова (вăл Пуянкасси ялĕнчен) Герман Матвеевичпа Тăвай тата Вăрмар радиовещанийĕсенче пĕрле ĕçленĕ малтанхи диктор хутшăнчĕ. Вăл Çĕрпӳре культурăпа çутĕç училищинче библиотекаре вĕреннĕ, парти райкомĕн библиотекинче ĕçленĕ. 1958 çулта Тăвайри радиора ĕçлеме пуçланă, диктор пулса эфира тухнă. 1962 çулта Вăрмарти радиовещани дикторĕ пулса ĕçленĕ. Галина Александровна хăйĕн сăмахĕнче Герман Матвеевпа пĕрле ĕçленĕ вăхăтсене хумханса аса илчĕ. «Уй-хир ĕçĕсем пуçлансан передачăсем кашни кун ирхине 5 сехет те 15 минутра эфира тухнă. Паллă событисем, уявсем, суйлавсем вăхăтĕнче кунне 3-шер те ирттернĕ. Передачăсене район больницин хирургĕпе Юрий Михайлович Петровпа пĕрле ирттернĕ. Герман Матвеевич йывăр магнитофон çĕклесе ирех район тăрăх тухса кайнă, колхоз-совхозсене çитсе унти ĕçченсем çинчен радиорепортажсем хатĕрленĕ. Ăмăртса ĕçлекен Тутар АССРĕнчи Зеленодольск тата Теччĕ районĕсенче пулса час-часах «Кӳршĕсем патĕнче» передачăсем кăларнă. Микрофон умĕнче района, колхоз-совхозсене, предприятисене ертсе пыракансем, учительсемпе врачсем, ĕçре малта пыракансем тухса калаçнă. Чăннипех те йывăр та канăççăр ĕç пулнă Герман Матвеевăн. Вăл пĕтĕм пурнăçне хаçатпа радио ĕçне панă»,– тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне Галина Максимова. Вăл пединститут хыççăн Чупайпа Арапуç шкулĕсенче вырăс чĕлхине вĕрентнĕ, 1982 çулта çемйипе Шупашкара куçса кайнă.

Вăрмартан çитнĕ Тамара Матвеевна Никитина Герман Матвеевпа пĕр вăхăтра ĕçленĕ. Герман Матвеевич çыхăну узелĕнчи парторганизаци секретарĕ пулнă май унта партипе комсомол пухăвĕсене ирттернине, çамрăксене ĕçре пулăшса пынине, яланах халăхпа пĕрле пулни çинчен каларĕ.

Тикашри территори пайĕн начальникĕ Валерий Иванович Нарсов ялтан сахал мар паллă çын тухнине, вĕсен шутĕнче Герман Матвеевич та пулнине палăртрĕ. «Ун ячĕ районта та, республикăра та палăрнă, Мускав таранах çитнĕ. Шел, творчествăри пултарулăхĕ чи çӳллĕ шая çĕкленнĕ вăхăтра пурнăçран уйăрлма тивнĕ унăн. Эпир ăна аса илсех тăратпăр, юбилейлă датăсене районта та, ялта та паллă тăватпăр. Вăл анлă тавракурăмлă, пултаруллă, талантлă, хăйĕн ĕçне чунтан парăннă чăн-чăн журналист. Тикаш ялĕн сумлă та пултаруллă ывăлĕн ячĕ яланах асра пулĕ, мĕншĕн тесен унран вĕренмелли, тĕслĕх илмелли питĕ нумай»,– терĕ Валерий Иванович.

Геннадий Германович, чылай кĕнеке авторĕ, ялти вăрçăра паттăррăн çапăçнă ентешĕсене аса илчĕ, ашшĕ 1939 çулта çырнă «Хурама» сăвва вуласа пачĕ. Унăн ашшĕн пиччĕшĕ Иван Матвеевич вăрçăра çапăçса пуçне хунă, аппăшĕ Мария Матвеевна окопсем чавнă, вăрман каснă.

Матвеевсен кӳрши Василиса Ивановна Волкова вĕсен çемйипе килĕштерсе пурăнни, ялта хисепре пулнине каларĕ.

Клуб заведующийĕ Надежда Георгиевна Гаврилова, администраци ĕçченĕ Зоя Ивановна Семенова хăйсен пĕрремĕш учительне, Герман Матвеев мăшăрне, Анна Андреевнăна ырăпа аса илчĕç. Тухса калакансем тата нумайăн пулчĕç.

Çырас енĕпе Матвеевсен ачисем те литературăпа журналистика çулĕ çине тăнă. Маргаритăпа Елена çырнă статьясем, калавсемпе сăвăсем Вăрмарпа Тăвай районĕсенчи, Шупашкарти «Хыпар», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Хресчен сасси» хаçатсенче тухаççĕ, кĕнекесем пичетлесе кăлараççĕ. Паян та кунта Галина Германовна Шупашкарти «Çĕнĕ вăхăт» типографире тухнă «Пурнăç аварĕнче» ятлă кĕнекине илсе килнĕ. Вăл ашшĕн дневникĕнчи сыпăксенчен, статйисенчен, сăввисенчен, унăн ĕçтешĕсен аса илĕвĕсенчен тăрать.Г.Матвеев В.Алендей писательпе, М.Волкова поэтпа, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕпе П.Порфирьевпа, Социализмла Ĕç Геройĕпе К.Петровăпа туслă çыхăну тытнă. «Халăхшăн, тăван çĕршывшăн ĕçлесе пурăнасси – маншăн чи хакли, чи телейли»,– тенĕ Г.Матвеев.

Мероприятие Ираида Иванова ертсе пычĕ. Вăл паллă ентеше халалланă кĕнекесемпе статьясен куравне йĕркеленĕ тата çемье архивĕнчи сăн ӳкерчĕкĕсенчен фотостенд хатĕрленĕ.

Тĕлпулăва Г.Матвеев юратнă «Вĕç, вĕç, куккук» юрăпа вĕçлерĕç.

**Иван ГЛАДКОВ**



Николай Пермяков, Николай Кадикин, Герман Матвеев. Тăвай ялĕ. 1955 çул

# Çĕнĕ Ишпуçĕнче – çĕвĕ цехĕ

**Кăçалхи çу уйăхĕнче Çĕнĕ Ишпуç ялĕнче кивĕ клуб вырăнĕнче çĕвĕ цехĕ уçăлнă. Минтер, утиял пичĕсем, простынь çĕлеççĕ. Ку пархатарлă ĕçе çак ялта çуралса ÿснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан Геннадий Иванович Иванов пуçăннă. «Тăррине çĕнĕрен витрĕмĕр. Электропроводкăна, газпа ăшăтмалли трубасене çĕнĕрен улăштартămăр. Нумай тăккаланма тиврĕ, паллах»,– терĕ вăл.**



Кунта хальлĕхе виççĕн ĕçлеççĕ: Елена Матвеева, Светлана Краснова, Зина Никитина.

– Мĕнле шут тытнă-ха эсир çĕвĕ цехĕ уçма?

– Кивĕ клуб юхăнса ан лартăр, ял çыннисене ĕç вырăнĕ, çемйисене кăшт та пулин пулăшу пултăр, терĕм.

– Материалсене ăçтан туянатăр?

– Хуларан кÿрсе килетĕп. Пусма-таварĕ лайăх та çирĕп. Хакĕ вăтам пурăнакана тивĕçтертĕр тетĕп. Хамăр ял çыннисемпе хуларисем те, Тутарстанран та килсе илеççĕ. Килсе курма, туянма пултаратăр. Тĕрлĕ тĕслĕ наборсене те суту-илĕве кăларнă. Кама мĕнли килĕшет. Суйламалăх пур.

Малашлăх плансемпе интереслентĕм. Нумаях пулмасть çĕнĕ оборудовани туяннă иккен.

–Вырăн таврашĕсĕр пуçне тата ĕç перчеткисем те çĕлеме пуçласшăн,– вĕçлерĕ калаçăва Геннадий Иванов.

Тепĕр ырă хыпар та пĕлме май килчĕ ял территори пайĕн пуçлăхĕнчен Д.Беловран. Геннадий Иванович СВОри ентешсем валли çак кунсенче 20 комплект вырăн наборĕ ăсатнă волонтерсем урлă. Çавăншăн хаçат урлă тав сăмахĕ каласа, ĕçре ăнăçу сунасшăн ăна.

**Зинаида ИВАНОВА**

# Ĕç ветеранне – Тав çырăвĕ

**Йăнтăрчă ялĕнче пурăнакан Нина Михайловна Михайлова çак кунсенче 90 çул тултарнă. Вăл – тыл ĕçченĕ, ĕç ветеранĕ. Ĕçлĕ ĕмĕрне ял хуçалăхне халалланă, нумай çул выльăх пăхнă çĕрте вăй хунă. Тăрăшуллă та яваплă ĕçпе хуçалăх экономикине аталантарма хăйĕн тÿпине хывнă.**




Мăшăрĕпе çирĕп çемье çавăрса 5 ача пăхса ÿстернĕ, 8 мăнукĕпе 9 кĕçĕн мăнукĕн çитĕнĕвĕсемшĕн савăнать.

Мухтавлă юбилей кунĕнче Нина Михайловна ячĕпе Раççей Президентĕнчен Владимир Путинран Тав çырăвĕ килнĕ. Тăвай округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов тава тивĕçлĕ ĕç ветеранне çырăва вуласа панă, ырă сунса ăшă сăмахсем каланă, вăрăм ĕмĕр суннă.

**Алевтина УСЬКИНА**

АСĂНУ ТУРНИРĔ

# Хастар спортсмен ячĕпе

**Иртнĕ уйăх вĕçĕнче Чутей стадионĕнче хастар футболиста, Чутейре çуралса ÿснĕ Артур Мясникова асăнса мини-футбол ăмăртăвĕ иртнĕ. Кунта 7 команда хутшăннă: Чутейпе Тăрмăшран 2-шер команда, Кармал, Тăвай, «Була» (Елчĕк МО).**

Вăййа хутшăнакансене Чутей территори уйрăмĕн пуçлăхĕ Дмитрий Белов саламланă. Турнир ăшă та туслă атмосферăра иртнĕ. Хĕрÿ кĕрешÿре Елчĕкрен килнĕ хăнасем ăстарах пулнă, иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене «Чутей – 2» тата «Чутей – 1» командăсем йышăннă.

Турнира йĕркелекенсем çĕнтерÿçĕсене кубокпа тата дипломсемпе наградăланă. Çапла çулленех хăйсен юлташне, пултаруллă спортсмена асăнса вăйă ирттереççĕ чутейсем.

**Зинаида ИВАНОВА**

# Груша çиййĕр

**Грушăра фруктоза глюкозăран ытларах. Хырăмлăхай парĕ пăсăлнă чухне усăллă ку. Грушăра кали нумай.**



Çавăнпа ăна темиçе çини те ĕçлесе карăннипе ыратакан мышцăсене лăплантарма пултарать. Юн сахал чухне (анеми) кунсерен кăнтăрлахи апатра 2 пысăк груша çиме сĕнеççĕ. Анчах хуппине шуратмалла, ăшăлăхне вара нимĕрлесе 2 чей кашăкĕ чухлĕ пылпа хутăштарсан аван.

Груша тин çеç пуçланнă бронхита та сиплет: 1 стакан груша сĕткенĕ çине 1 десерт кашăкĕ шăлан (шиповник) сиропĕ ярса кунне 3 хут çуршар стакан ĕçеççĕ.

Çакна астумалла: груша çинĕ хыççăн чĕрĕ шыв ĕçме, çавăн пекех йывăр апатпа какай çиме юрамасть. Унсăр пуçне ку çимĕçе нихăçан та выçварла çиме сĕнмеççĕ. Тухăç халăхĕсен сăмахлăхĕ çапларах янăрать: «Ирпе панулми çини чĕрешĕн роза пекех! Ирпе груша çини – чĕрешĕн наркăмăш!»

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

# Сăхăтпуç тăрăхĕнче



Ку сăн ÿкерчĕксене Сăхăтпуç хастарĕ Лаврентий Данилов тунă. Пĕр сăн ÿкерчĕкĕнче Сергей Трофимов сăнланнă, вăл ял çумĕнчи пĕвене илем кĕртессипе тимлет. Тепри Сăхăтпуçĕнчи ял уявне хутшăннă Сергей Павлов (сулахайран пĕрремĕшĕ) эстрада юрăçине, Юрий Данилов юрăçă-гитариста тата Светлана Пудовкина юрăçа куратăр. Виççĕмĕш сăн ÿкерчĕкре Пикенеç кÿлли çумĕнче Ульяновск хулинчен яла канма килнĕ Женя Мясников (4-мĕш класс, каратист) ÿкерĕннĕ.





ПĔЛЕТĔР–И?

# Тăвар пулăшать



- Пушмак ăшне тăвар тултарнă пĕчĕк хутаç хумалла. Темиçе сехетрен лайăх мар шăршă пĕтет.
- Сĕтел çитти е тумтир çине пылак эрех тăкăнчĕ-и? Çиййĕнчех тăвар сапăр. Унтан япалана çур сехет сивĕ шывра тытнă хыççăн çумалла.
- Тăватă апат кашăкĕ тăвара 1 литр вĕри шывра ирĕлтермелле. Тарпа вараланнă япаласене çак хутăшра çумалла.
- Тăвара 20–30 тумлам кĕл чечек çăвĕпе хутăштармалла, савăта ярса пÿлĕме лартмалла. Йĕритавра ырă шăршă сарăлĕ.
- Лимон сĕткенĕпе хутăштарнă тăвар раковинăна, чашăк-кашăка лайăх тасатать.
- Апат пĕçернĕ чухне плита çине тăкăнсан çав вырăна тăвар сапма сĕнеççĕ. Тăвар çунмасть, шăршă та кăлармасть, хыççăн тасатса илме те çăмăлрах пулĕ.

СĔТЕЛĔР ТУЛЛИ ПУЛТĂР

# Хăяр вăлчи

**1 кг хăяр, 200 г сухан, 300 г кишĕр, 2 туттлă пăрăç, 0,5 кг помидор, 2 кашăк тăвар, ăшаламалăх тип çу кирлĕ.**



Хăяра тата кишĕре тасатмалла, уйрăмшарăн шултра теркăпа хырмалла.

Сухана çурма çаврашкасем туса çинçен турамалла. Сухана кишĕрпе пĕрле тип çупа ăшаламалла.

Пăрăçа тасатса тăваткаллаcа турамалла. Помидора хуппинчен тасатса аш арманĕпе авăртмалла.

Пур çимĕçе те пĕрлештермелле, вĕреме кĕртмелле, йăваш пĕчĕк çулăм çинче 40 минут пăшăхламалла.

СЫВЛĂХ

# Начарланасшăн-и?

**Организма шĕвек ытларах кирлĕ. Çавăнпа кашни сехетре 2 тумлам лимон сĕткенĕ хушнă 250 миллилитр шыв ĕçмелле.**



Цитрус çимĕçĕнчи С витамин япаласен ылмашăвне лайăхлатать, ытлашши килограмсенчен хăтăлма пулăшать.

Кăнтăрлахи апата пăрăç хушмалла. Унăн витĕмĕпе каçхине апат çиес килмĕ.

Пĕтнĕк шăршиллĕ çу шăршламалла. Вăл апатçимĕçпе çыхăннă шухăша хăвалать.

ПĔЛМЕ

**Экспертсем палăртнă тăрăх, пирус туртакан çын кунне тĕтĕме вăтамран 200 хут ăша çăтать. Унпа пĕрле лекекен химин 4000 çыхăнăвĕнчен 400-ĕшĕ уйрăмах вăйлă наркăмăш.**

Аммиак, ацетон, бензол, полони, формальдегид. Ку – тĕтĕмпе пĕрле организм йышăнакан хутăшсемпе канцерогенсен тулли списокĕ мар-ха.

Сывлăх сыхлавĕн пĕтĕм тĕнчери организацийĕ шута илнĕ тăрăх, çулсеренхи 7 миллион вилĕм сигарет туртнин сăлтавĕпе çыхăннă. 2030 çул тĕлне ку цифра 8 миллионран та иртме пултарать. Эппин, капла ракпа чирлекенсем те нумайланĕç.

# ТЕЛЕПРОГРАММА 8 - 14 сентября 2025 г.

## Понедельник, 8

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15, 18.30 «Время покажет» 16+
14.00, 17.00, 23.00 «Большая игра» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 Время
22.00 Т/с «СПРОСИТЕ МЕДСЕСТРУ. НОВЫЕ СЕРИИ»16+
0.10 «Время героев» 16+
1.10, 3.05 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 16.30, 20.00, 3.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 21.10 Вести. Местное время
12.00, 18.00 «60 Минут» 12+
14.30, 2.10, 3.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.00 «Малахов» 16+
21.30 Т/с «СПАССКАЯ. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
23.30 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+

### НТВ

4.50, 8.25, 10.35 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. ДАЛЬНИЕ РУБЕЖИ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00, 23.35 Сегодня
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «За гранью» 16+
17.50 «ДНК» 16+
20.00 Т/с «СТРАЖНИК» 16+
23.15, 0.00 Т/с «СЕВЕРНАЯ ЗВЕЗДА» 16+
1.50 Т/с «АКУЛА» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00 «Хроники московского быта» 16+
6.00 «Королевство лишних слов» 6+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
8.00, 17.30, 4.30 «Мультимир» 6+
9.30 «Время СВОих» 12+
10.00 «Хăв пурăнас килнĕ пек ан пурăн» Спектакль 12+
12.00 «Молодёжка-21» 12+
12.30 М/с «Нильс» 6+
13.00, 15.00, 19.00, 0.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
13.05, 14.10, 0.30 Х/ф «ЖАНДАРМ ИЗ СЕН-ТРОПЕ» 12+
14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
14.05 «Без молока» 12+
15.05, 4.00 Д/ф «Великие женщины в истории России» 12+
15.45 Д/ф «Не женское дело» 12+
16.05, 2.30 «Люди-легенды. Аркадий Айдак» 12+
16.30, 3.00 Д/ф «На приеме у главного врача» 12+
18.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
18.10 «Женитьба» 12+
18.30 «Территория здоровья» 12+
19.30, 22.00, 23.30 «Çĕнтерÿ паллисем» 12+
20.30 «Источник силы» 12+
21.00 «Кил ăшши» 12+
21.30 «Люди-легенды. Василий Чапаев» 12+
22.30, 2.00 «Фильм о городе-Герое. Новороссийск» 16+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
11.30-12.00 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Вторник, 9

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15, 18.30 «Время покажет» 16+
14.00, 17.00, 23.00 «Большая игра» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 Время
22.00 Т/с «СПРОСИТЕ МЕДСЕСТРУ. НОВЫЕ СЕРИИ»16+
0.10 Д/с «Обыкновенный фашизм 2» 18+
1.20, 3.05 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 16.30, 20.00, 3.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 21.10 Вести. Местное время
12.00, 18.00 «60 Минут» 12+
14.30, 2.10, 3.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.00 «Малахов» 16+
21.30 Т/с «СПАССКАЯ. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
23.30 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+

### НТВ

5.00, 8.25, 10.35 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. ДАЛЬНИЕ РУБЕЖИ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00, 23.35 Сегодня
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «За гранью» 16+
17.50 «ДНК» 16+
20.00 Т/с «СТРАЖНИК» 16+
23.15, 0.00 Т/с «СЕВЕРНАЯ ЗВЕЗДА» 16+
1.50 Т/с «АКУЛА» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00, 13.00, 15.00, 19.00, 0.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
5.30, 11.30 «Çĕнтерÿ паллисем» 12+
6.00, 18.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
6.10, 18.10 «Женитьба» 12+
6.30 «Территория здоровья» 12+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
8.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
9.30, 17.30 «Мультимир» 6+
10.00 «Источник силы» 12+
10.30 «Кил ăшши» 12+
11.00 «Люди-легенды. Василий Чапаев» 12+
12.00 «Время СВОих» 12+
12.30 М/с «Нильс» 6+
13.05, 14.05, 0.30 Х/ф «ЖАНДАРМ В НЬЮ-ЙОРКЕ» 12+
15.05, 4.00 Д/ф «Великие женщины в истории России» 12+
16.05, 2.30 «Молодёжка-21» 12+
16.30, 3.00 «Литература тĕпелĕ» 12+
17.00, 3.30 Д/ф «Люди-легенды. Константин Иванов» 12+
18.30 «Люди-легенды. Александр Петров» 12+
19.30, 23.30 Х/ф «КОРОБОЧКА ВОСПОМИНАНИЙ» 12+
20.30 «Инçет телей çути» 12+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
11.30-12.00 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Среда, 10

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15, 18.30 «Время покажет» 16+
14.00, 17.00, 23.00 «Большая игра» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 Время
22.00 Т/с «СПРОСИТЕ МЕДСЕСТРУ. НОВЫЕ СЕРИИ»16+
0.10 Д/с «Обыкновенный фашизм 2» 18+
1.15, 3.05 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 16.30, 20.00, 3.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 21.10 Вести. Местное время
12.00, 18.00 «60 Минут» 12+
14.30, 2.10, 3.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.00 «Малахов» 16+
21.30 Т/с «СПАССКАЯ. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
23.30 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+

### НТВ

5.00, 8.25, 10.35 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. ДАЛЬНИЕ РУБЕЖИ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00, 23.35 Сегодня
11.00 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. ВЕКТОР АТАКИ» 16+
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «За гранью» 16+
17.50 «ДНК» 16+
20.00 Т/с «СТРАЖНИК» 16+
23.15, 0.00 Т/с «СЕВЕРНАЯ ЗВЕЗДА» 16+
1.50 Т/с «АКУЛА» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00, 13.00, 19.00, 0.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
5.30 Х/ф «КОРОБОЧКА ВОСПОМИНАНИЙ» 12+
6.00, 18.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
6.10, 18.10 «Женитьба» 12+
6.30 «Люди-легенды. Александр Петров» 12+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
8.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
9.30, 17.30 «Мультимир» 6+
10.00 «Инçет телей çути» 12+
12.30 М/с «Нильс» 6+
13.05, 14.05, 0.30 Х/ф «ЖАНДАРМ ЖЕНИТСЯ» 12+
15.00 «Совместные мероприятия кандидатов на пост Главы Чувашской Республики» Прямая трансляция
16.05, 3.30 «Источник силы» 12+
16.30, 2.30 «Çĕнтерÿ паллисем» 12+
17.00, 3.00 «Чувашский ланч» 12+
18.30 «Формула счастливого детства» 12+
19.30, 23.30 «Тĕплĕ калаçу» 12+
20.30 «Время СВОих» 12+
21.00 Д/ф «На приёме у главного врача» 12+
22.00 «Молодёжка-21» 12+
22.30, 2.00 «Фильм о городе-Герое. Москва» 16+
4.00 Д/ф «Великие женщины в истории России» 12+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
11.30-12.00 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Четверг, 11

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15, 18.30 «Время покажет» 16+
14.00, 17.00, 23.00 «Большая игра» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 Время
22.00 Т/с «СПРОСИТЕ МЕДСЕСТРУ. НОВЫЕ СЕРИИ»16+
0.10 Д/с «Обыкновенный фашизм 2» 18+
1.20, 3.05 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 16.30, 20.00, 3.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 21.10 Вести. Местное время
12.00, 18.00 «60 Минут» 12+
14.30, 2.10, 3.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.00 «Малахов» 16+
21.30 Т/с «СПАССКАЯ. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
23.30 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+

### НТВ

5.00, 8.25, 10.35 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. ВЕКТОР АТАКИ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00, 23.35 Сегодня
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «За гранью» 16+
17.50 «ДНК» 16+
20.00 Т/с «СТРАЖНИК» 16+
23.15, 0.15 Т/с «СЕВЕРНАЯ ЗВЕЗДА» 16+
0.00 «Поздняков» 16+
2.05 Х/ф «ВЗРЫВ ИЗ ПРОШЛОГО» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00, 13.00, 15.00, 19.00, 0.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
5.30 «Тĕплĕ калаçу» 12+
6.00, 18.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
6.10, 18.10 «Женитьба» 12+
6.30 «Формула счастливого детства» 12+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
8.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
9.30 «Мультимир» 6+
10.00 «Время СВОих» 12+
10.30 Д/ф «На приёме у главного врача» 12+
11.30 «Молодёжка-21» 12+
12.00 «Финтеллект» 12+
12.30 М/с «Нильс» 6+
13.05, 14.05, 0.30 Х/ф «ЖАНДАРМ НА ПРОГУЛКЕ» 12+
15.05, 4.00 Д/ф «Великие женщины в истории России» 12+
16.05, 2.00 «Вокальная карта Чувашии» 12+
18.40 «Тур по Чувашии» 12+
19.30, 23.30 «Мой город. Чебоксарский кремль» 12+
19.45, 23.45 «Мой город. Владимирская горка» 12+
20.30 «Иван Яковлев çамрăксен чĕринче» 12+
21.00 «Искусство ăстисем. Тамара Чумакова» 12+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
11.30-12.00 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Пятница, 12

5.00 «Доброе утро» 0+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.20 «Модный приговор» 0+
10.10 «Жить здорово!» 16+
11.00, 12.15 «Время покажет» 16+
14.00, 17.00 «Большая игра» 16+
15.15 «Давай поженимся!» 16+
16.05 «Мужское / Женское» 16+
18.40 «Человек и закон» 16+
19.45 «Поле чудес» 16+
21.00 Время
21.45 «Голос. Дети» Новый сезон 0+
23.20 Т/с «ШЕРЛОК И ДОЧЬ» 16+
0.15 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России»
9.00, 11.00, 14.00, 16.30, 20.00 Вести
9.30 Местное время
9.55 «О самом главном» 12+
11.30, 21.10 Вести. Местное время
12.00, 18.00 «60 Минут» 12+
14.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 16+
17.00 «Прямой эфир» 16+
21.30 «Ну-ка, все вместе!» 12+
23.55 «Истории Большой Страны» 12+
0.55 Х/ф «НАПРАСНЫЕ НАДЕЖДЫ» 12+

### НТВ

5.00, 11.05 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. ВЕКТОР АТАКИ» 16+
6.30 «Утро. Самое лучшее» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.25 «Мои университеты. Будущее за настоящим» 6+
9.25, 10.35 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ» 16+
13.25 «Чрезвычайное происшествие» 16+
14.00 «Место встречи» 16+
16.45 «ДНК» 16+
17.55 «Жди меня» 12+
20.00 Т/с «СТРАЖНИК» 16+
0.20 «Своя правда» 16+
2.10 «Захар Прилепин. Уроки русского» 12+
2.40 «Квартирный вопрос» 0+
3.35 Х/ф «УДАЧНЫЙ ОБМЕН» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00, 13.00, 15.00 «Республика» Хыпарсен кăларăмĕ 12+
5.30 «Мой город. Чебоксарский кремль» 12+
5.45 «Мой город. Владимирская горка» 12+
6.00, 18.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
6.10 «Женитьба» 12+
18.40 «Тур по Чувашии» 12+
7.00, 8.30 «Ир пулсан» 12+
8.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика» Информационная программа 12+
9.30 «Мультимир» 6+
10.00 «Иван Яковлев çамрăксен чĕринче» 12+
10.30 «Искусство ăстисем. Тамара Чумакова» 12+
12.30 М/с «Нильс» 6+
13.05, 14.05, 1.00 Х/ф «ЖАНДАРМ И ИНОПЛАНЕТЯНЕ» 12+
15.05, 4.30 Д/ф «Великие женщины в истории России» 12+
16.05, 2.30 «Любовь покоряет мир» Концерт 12+
18.10 «Мужчина и женщина-2» 12+
19.00, 0.00 «Эрне» Хыпарсен тишкерĕвĕ 12+
20.30 «Юлия Олеговна меняет профессию» 12+
21.00 Х/ф «УХТЕР МУЧИ ЮРРИСЕМ» 12+
22.00 «Финтеллект» 12+
22.30 «Фильм о городе-Герое. Керчь» 16+
23.30 «Фильм о городе-Герое. Тула» 16+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

5.07-5.10, 5.35-5.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
6.07-6.10, 6.35-6.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
7.07-7.10, 7.35-7.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
8.07-8.10, 8.35-8.41 Местное время. Вести-Чувашия. Утро
9.30-9.55 Местное время. Вести-Чăваш ен
11.30-12.00 Местное время. Вести-Чувашия
21.10-21.30 Местное время. Вести-Чувашия

## Суббота, 13

6.00 «Доброе утро. Суббота» 0+
9.45 «Слово пастыря» 0+
10.00, 12.00, 18.00 Новости
10.15, 23.55 Д/ф «Александр Масляков. Улыбнитесь, вспомнив обо мне...» 16+
11.05 «Вспомнить всё» 12+
12.15 «Поехали!» 12+
13.05 Х/ф «Я ШАГАЮ ПО МОСКВЕ» 12+
14.35 Т/с «БОЛЬШАЯ ПЕРЕМЕНА» 12+
17.05 «Кто хочет стать миллионером?» 12+
18.20 Концерт «Юбилей в кругу друзей» 12+
21.00 Время
21.35 «Клуб веселых и находчивых. Встреча выпускников 2025» 16+
0.45 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.00 «Утро России. Суббота»
8.00 Местное время. Суббота
8.35 «По секрету всему свету»
9.00 «Формула еды» 12+
9.25 «Пятеро на одного»
10.10 «Сто к одному»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30 «Наши. Военкоры» 12+
12.00 «Доктор Мясников» 12+
13.00 «Большие перемены»
14.30, 20.50 Вести. Местное время
14.50 «Юмор! Юмор! Юмор!!!» 16+
17.50 «Привет, Андрей!» 12+
21.00 Х/ф «ПОХИЩЕННАЯ» 16+
0.40 Большой праздничный концерт «Посвящение Москве» Трансляция из парка «Зарядье»
2.10 Х/ф «ОДИНОЧКА» 12+

### НТВ

4.55 Х/ф «ЛОВУШКА» 16+
6.20 «Жди меня» 12+
7.20 «Смотр» 16+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 «Поедем, поедим!» 16+
9.20 «Едим дома» 0+
10.20 «Главная дорога» 16+
11.00 «Живая еда» 12+
12.00 «Квартирный вопрос» 0+
13.00 «Основано на реальных событиях» 16+
14.00 «Секрет на миллион» 16+
16.20 «ЧП. Расследование» 16+
17.00 «Своя игра» 0+
18.00 «Следствие вели...» 16+
19.00 «Центральное телевидение» 16+
20.10 «ВИА Суперстар!» Новый +
0.00 «Ты не поверишь!» 16+
1.00 «Ч.Т.Д.» с Маргаритой Симоньян 16+
1.30 «Квартирник НТВ у Маргулиса» 16+
2.35 «Дачный ответ» 0+
3.30 Х/ф «ВСЕ ПРОСТО» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00 «Эрне» Хыпарсен тишкерĕвĕ 12+
6.00 «Наши новости» Информационная программа 12+
6.10, 18.00 «Мужчина и женщина-2» 12+
7.00, 3.00 Д/ф «Морская авиация. Ударная сила океанов» 16+
8.00, 2.00 Д/ф «Россия вне зоны доступа» 12+
8.00 «Республика» Информационная программа 12+
8.30, 4.30 «Мультимир» 6+
9.00 Х/ф «УХТЕР МУЧИ ЮРРИСЕМ» 12+
10.00 «Финтеллект» 12+
10.30 М/с «Ик-ик упа тус» 6+
11.00, 0.00 Х/ф «ВАРВАРИНЫ СВАДЬБЫ» 16+
13.00 «Tango Fest» Симфоническая капелла 12+
15.30 «Открытие Года Победы и патриотизма» Концерт 12+
17.00, 4.00 «Молодежка-21» 12+
17.30 М/с «Нильс» 6+
19.00 «Ырă кăмăлпа» 12+
20.30 «Созвездие земляков» 12+
23.30 «Фильм о городе-Герое. Керчь» 16+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

8.00-8.15 Местное время. Суббота.
8.20-8.35 Местное время. Суббота. Вести. Интервью (чув)
14.30-14.50 Местное время. Вести-Чувашия
21.50-21.00 Местное время. Вести-Чувашия

## Воскресенье, 14

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 «Играй, гармонь любимая!» 12+
6.55 «Часовой» 12+
7.25 «Здоровье» 16+
8.30 М/ф «Золотая коллекция СоюзМ/фа» 0+
9.10 «Непутевые заметки» 12+
9.30 «Мечталлион» 12+
10.15 «Жизнь других» 12+
11.05 «Повара на колесах» 12+
12.15 «Видели видео?» 0+
13.30 Д/ф «Светлана Крючкова. Мы выбираем, нас выбирают» 12+
14.20 Т/с «БОЛЬШАЯ ПЕРЕМЕНА» 12+
16.50 Д/ф «Уроки забвения» 12+
19.00 «Две звезды» Семейный подряд 12+
21.00 Время
23.00 Т/с «ТРИГГЕР» 18+
0.00 Подкаст.Лаб 16+

### РОССИЯ 1

5.25, 2.30 Х/ф «ДВА МГНОВЕНИЯ ЛЮБВИ» 12+
7.20 В кругу друзей
10.00 Местное время. Воскресенье
8.35 «Когда все дома»
9.25 «Утренняя почта»
10.10 «Сто к одному»
11.00, 14.00, 17.00 Вести
11.30 «Наши. Военкоры» 12+
12.00 Д/ф «К 80-летию атомной промышленности. Путь» 12+
13.00 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» 12+
14.30 Вести. Местное время
15.00 «Аншлаг и Компания» 16+
17.50 «Песни от всей души» 12+
20.00 Вести недели
22.30 «Москва. Кремль. Путин.»
23.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+
1.30 Д/ф «К 80-летию атомной промышленности. Путь» 12+

### НТВ

5.05 Х/ф «ОТЦЫ» 16+
6.50 «Центральное телевидение» 16+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 «У нас выигрывают!» 12+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.00 «НашПотребНадзор» 16+
14.00 «Однажды...» 16+
15.00 «По следу монстра» 16+
16.20 «Человек в праве» 16+
17.00 «Своя игра» 0+
18.00 «Новые русские сенсации» 16+
19.00 Итоги недели
20.20 «Ты супер!» Новый сезон 6+
23.40 «Звезды сошлись» 16+
1.15 «Основано на реальных событиях» 16+
4.20 «ЧП. Расследование» 16+

### НТРК ЧУВАШИИ

5.00 Д/ф «Из мухи слона» 12+
6.00 «Мужчина и женщина-2» 12+
7.00 Д/ф «Россия вне зоны доступа» 12+
8.00 «Самана» 12+
9.00 «Эрне» Хыпарсен тишкерĕвĕ 12+
10.00 «Ырă кăмăлпа» 12+
11.30 «Созвездие земляков» 12+
14.30, 2.30 «Хроники московского быта» 16+
15.30 «Яланах пурăнар пĕрпĕрне юратса» Юрий Жуков композиторăн юбилей касĕ 12+
18.00 «Звонок из прошлого» 12+
18.30 «Законы клоунов» 12+
18.45 «Миру нужнее» 12+
19.00 «Юратусăр юрă çуралмасть» «Сăрнай» халăх ансамблĕ 12+
21.30 «Молодёжка-21» 12+
22.00 «Маршрут построен» 12+
22.30 «Çунат сараççĕ ĕмĕтсем» Камит 12+
1.00 Х/ф «В НЕБО ЗА МЕЧТОЙ» 6+
3.30 «Время СВОих» 12+
4.00 Д/ф «Вспомнить всё» 12+
4.30 «Мультимир» 6+

### РОССИЯ 1 ЧУВАШИЯ ЧТВ

8.00-8.15 Местное время. Воскресенье.
8.20-8.35 Местное время. Воскресенье.
14.30-15.00 Местное время. Вести-Чувашия

## Ăшшăн саламлатпăр

Дорогой наш **Соловьев Иван Иванович**!

От всей души поздравляем тебя со славным юбилеем - 80 летием! Эта значимая дата - свидетельство твоей мудрости, доброты, стойкости и огромной жизненной силы. Для нашей семьи ты всегда был и останешься нерушимой опорой, любящим мужем, заботливым отцом и дедушкой. Спасибо тебе за каждый прожитый вместе год, за твою любовь и поддержку. Желаем



тебе крепкого здоровья, неиссякаемой энергии, душевного тепла, радости от успехов твоих детей и внуков.

Пусть каждый твой день будет наполнен светом, уютом, вниманием близких. Мы бесконечно счастливы, что шли и идем рядом с тобой.

С юбилеем, наш дорогой! Мы все очень тебя любим, ценим.

**Жена, 3 детей, внуки и правнучка.** 0991

Хамăрăн хисеплĕрен те хисеплĕ, хаклă ĕç ветеранне, редактор çуменче ĕçленĕ **Иван Иванович Соловьева** 80 çулхи сумлă юбилейпе хĕрӳллĕн те чун-чĕрери чи ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Сăн-питре яланах телей кулли кăна çиçтĕр, сывлăхăр çирĕп пултăр, вăй-халăр çăлкуç шывĕ пек тапса тăтăр, мĕн ĕмĕтленни, шухăшлани пурнăçа кĕрсе пытăр.

Иван Иванович пысăк пултаруллă та мал ĕмĕтлĕ, çирĕп кăмăллă журналист. Вăл нумай çул «Ял ĕçченĕ» хаçатра ĕçлесе мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен вăй хучĕ. Пенсие тухсан та юратнă ĕçрен часах уйрăлмарĕ. Лара- тăма пĕлмен журналист ăçта кăна çитмен-ши, мĕнле кăна темăна хаçатра çутатман-ши? Çавăнпах пулĕ ăна тĕрлĕ наградăсемпе чысланă. Раççей журналисчĕсен членĕ тĕрлĕ мероприятисене, лекцисене хутшăннă, çав вăхăтрах шашка-шахмат вăййисенче те пĕрре кăна мар малти вырăнсене йышăннă. Паянхи кун та Иван Иванович хăйне хастар тытать. Эпир ăна юратпăр, шутсăр хисеплетпĕр.

Сумлă юбилейпе сире! Пултарулăху, çитĕнĕвӳ тапса тăтăр. Пурнăç илемĕпе киленсе нумай-нумай çул пурăнмалла пултăр.

**Ырă сунса – «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсем**

Савнă мăшăра, чун юратнă аннене, чи ырă кăмăллă кукамая, тарават та хисеплĕ тăвана, тăхлачăна, Тăвай ялĕнче пурăнакан **Светлана Анатольевна Поликарповăна** сентябрĕн 5-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу, çемьере килĕшӳпе юрату сунатпăр.



Аннемĕр, эсĕ пурнăç çулĕпе тĕрĕс утма вĕрентетĕн. Хăвăн чун-чĕре ăшшине пире парнелетĕн. Турă çырнине Тăвай енрех тупса 33 çул пĕр сукмакпа шăкăл-шăкăл утатăр. Атте Рудольф Анатольевич право хуралĕнче тăрăшса канăва тухнă. Вăл та çемьешĕн, тăванĕсемшĕн тĕрев пулса малтан мала хастаррăн утăмлама хавхалантарать.

Пирĕн сумлă юбиляр кун-çулне çĕр çинчи чи пархатарлă ĕçпе çыхăнтарнă. Чăваш патшалăх университетĕнче вĕренсе алла диплом илнĕренпех сывлăх хуралĕнче ача-пăча тухтăрĕнче вăй хурать. Ачасене сипленисĕр пуçне вĕсем хăйсене телейлĕ те сывă туйччăр тесе хăйĕнчен мĕн килнине йăлт тăвать. Пурин валли те тимлĕхпе ăшăлăх çитет унăн. Канашри ача-пăча поликлиникинче вăй хунăран ирхине çăмăл машина рулĕ умне ларса юратнă ĕçне васкать. Тĕрлĕ Хисеп хучĕсене, Тав çырăвĕсене тивĕçни хăех – сăваплă ĕçĕн хаклавĕ ĕнтĕ.

Эпир санпа чăнласах мухтанатпăр, çĕр çинчи мĕнпур ыррине сунатпăр. Хĕвеллĕ тӳпе санăн пурнăçна çутатса тăтăр, килекен кашни кун телейлĕ пултăр.

Эс пурри – пирĕн пуянлăх,
Эс пурри – кил-çурт илемĕ,
Эс пурри – чĕре ăшши,
Эсĕ пирĕншĕн – чи хакли.

**Ăшă салампа – мăшăрĕ,**
**Лена хĕрĕпе кĕрӳшĕ, Люба мăнукĕ,**
**Сергей ывăлĕ, хăтипе тăхлачи, тăванĕсем** 0993

Хисеплĕ те пултаруллă ĕçтешĕмĕре **Юрий Николаевич Никифорова** сентябрĕн 6-мĕшĕнчи 55 çулхи юбилейĕпе ăшшăн саламлатпăр. Малашне те пурнăç çулĕпе хастаррăн утма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Куллен округри ял лавккисене кăпăш çăкăр-булка изделийĕсем тата ытти тавар çитерет. 25 çул ытла Вырăс салинчен Тăвайне юратнă ĕçе васкать ăста водитель.

Харсăр ĕçчене тивĕçлипех наградăсемпе чысланă. Малашне те юратнă ĕçӳ хавхалану кӳтĕр, Турă пулăшса пытăр, пурнăçу çутă кунсемпе тулса тăтăр.

Авăн уйăхĕн малтанхи кунĕнче Элпуç шкулĕнчи столовăйĕнче ĕçлекен **Наталия Вячеславовна Федорова** повар патне те çиттĕр сумлă 50 çулхи юбилей саламĕ. Вăл хастар та вашават, пуринпе те пĕр чĕлхе тупма пĕлет. Тутлă апатпа кашнин кăмăлне тивĕçтерме тăрăшать. Пурнăçра телейлĕ самантсем кăна пулччăр сирĕн. Ĕмĕрĕн тепĕр çуррине парăнтарма иксĕлми вăйхал, çирĕп сывлăх, телей сунатпăр.

**«Тăвайри кооператив» потребобщество**





Военный комиссариат по г. Канаш, Канашскому и Янтиковскому районам Чувашской Республики:

**г. Канаш, ул. Полевая, 18**

Телефон дежурной части: **8 (835 33) 4-18-21**

Инструктора пункта отбора на военную службу по контракту

Андреев Иван Альбертович **8-952-027-51-12**


# Врачсем йышăнаççĕ

**«Сывлăх патне – утăм» проектпа килĕшӳллĕн шурă халатлă ĕçченсем Тăвай муниципалитет округĕнчи 14 ял территорийĕнче пулнă, пурĕ 1569 çынна йышăннă.**

Çак эрнере «Сывлăх пунктĕнче» медицина ĕçченĕсем Ураскассинче пурăнакансене тĕрĕсленĕ. 102 çын сывлăхне тĕрĕслеттернĕ тухтăрсем патĕнче.

–Тата хăш вырăнта тĕрĕсленме пулать-ши сентябрь уйăхĕнче? – пĕлесшĕн Тăвай ялĕнче пурăнакансем.

«Магнит» суту-илӳ çурчĕ патĕнче сентябрĕн 10-мĕшĕнче 10 сехетрен пуçласа 14 сехетчен сывлăха тĕрĕслеттерме май пулĕ. Тĕрлĕ анализсем парса тĕрĕсленнисĕр пуçне, терапевт, стоматолог, хирург, акушер-гинеколог йышăнĕç. Шупашкарти медицина учрежденийĕнчи куç врачĕ патĕнче те тĕрĕсленме май пулĕ.

**Татьяна ИГНАТЬЕВА**


0999 ТЕПЛИЦЫ. Доставка, сборка. Т. 8-9871294822 11-1

0906 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Т. 8-9279985488. Володя. 11-5

0321 ПЕСОК. ЩЕБЕНЬ. ОПГС. Т. 8-9061333944 22-14

2027 КУПЛЮ бычков, коров, телок. Т. 8-9370160057 28-11

0966 ПЛАСТ. ОКНА. Качественно с установкой. Т. 8-9656867950 6-3

0981 Ремонт холодильников, стир. машин. Т. 8-9279955504 3-2

0994 ПЕСОК. ГРАВМАССА. ЩЕБЕНЬ. НАВОЗ. От 3-х тонн. Т. 8-9523106871 9-1

0998 ПРОДАЮ доломитовую муку (антипроволочник) в мешках. Доставка. Т. 8-9603030529 3-1

0948 Требуются разнорабочие в ПЕРМЬ. Вахта. З/п от 150 т.р. Т. 8-9373882555 Т. 8-9279991880 18-4

2206 КУП. КОЗ, ОВЕЦ, БЫЧКОВ Т. 8-9278508564 25-24

0992 Пĕрре пăруланă ĕне сутатăп. Т. 8-9093042940

0793 ДРОВА (колотые, метровые). Доски: хвоя, береза, осина. Сруб. Т. 8-9373944344, 8-9278423391 25-9

0995 Покупаем ЛИПОВЫЙ мед 230 руб за кг Минимальный объем 400 кг Сами приезжаем, тара и деньги сразу. Т. 8-9037715590

0881. Продам поликарбонат сотовый прозрачный/цветной. 1800 руб. Доставка бесплатная. Оплата при получении. Т. 8-9774878497 10-6

0180 « ЭЛЕКТРОПАСТУХИ» На любую площадь. Есть доставка. Выгодные цены. Машинки для стрижки овец. Т. 8-9613472140 11-7


Мы есть в сообществе «ВКонтакте», также в телеграмм канале. Хотите узнать подробнее, проходите по QR-коду

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

# Хăвăрт пулаканни

**2 кг купăста, 2 вăтам кишĕр кирлĕ.**

**Маринад: 1 л шыв, 1 кашăк тӳпелесе тăвар, 1 чей кашăкĕ тӳпелесе сахăр, 1 кашăк уксус эссенцийĕ.**



Купăстана турамалла, кишĕре шултра терка витĕр кăлармалла. Купăстапа кишĕре хутăштармалла та виçĕ литрлă банкăна хытă чышса тултармалла.

Маринад валли шыва тăварпа сахăр, уксус ярса вĕреме кĕртмелле те банкăна ямалла. Каçпа хатĕрлетĕн – ирпе çиетĕн.

Тăвай муниципалитет округĕн администрацийĕ Элпуçĕнче çуралса ӳснĕ

**Дмитрий Витальевич ИГНАТЬЕВ**

Украинăри ятарлă çар операцийĕнче паттăррăн пуç хунă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


"Ял ĕçченĕ" (“Сельский труженик”)

Тĕп редактор А.Е.ЕГОРОВА

Учредительсем – Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Ен цифра аталанăвĕпе информаци политикин министерствин «Тăвай районĕн «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕ» ХТУ

Хаçата çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Управленийĕ 2012 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00239 №-пе регистрациленĕ.

Хаçат эрнере 1 хут (эрнекун) чăвашла (хăш-пĕр материалсем вырăсла) тухать.

Пичете панă 04.09.2025 ç. 19.00, графикпе 19.00 сех.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ тата каялла тавăрса памаççĕ. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн редакци явап тытмасть. Реклама материалĕсен палли – Р

Номершĕн яваплă дежурнăй И.И.ГЛАДКОВ

Компьютерпа калăплакан: Н.В.АЛЕКСАНДРОВА

Хаçата районти “Ял ĕçченĕ” хаçат редакцийĕнче наборласа версткăланă, “Чăваш Ен” ИПК” АУ типографийĕнче пичетленĕ. Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт. Çырăнтару индексĕ – ПР 238. Калăпăшĕ – 1 пичет листи. Тираж – 1425 Заказ

Редакципе издатель адресĕ: 429290, Чăваш Республики, Тăвай ялĕ, Ленин проспекчĕ, 11-мĕш çурт.

Телефонсем: тĕп редактор – 2-11-10, обществăпа политика, экономика пурнăçĕн тата çырусен пайĕсем – 2-14-05, яваплă секретарь тата наборпа верстка пайĕ – 2-13-10, бухгалтери – 2-15-64. Электронлă почта: smi11@cap.ru